Ц. Б. ... 0

Пĕр №-рĕ 10 пус. 19-мĕш çул тухать.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1937 НОЙАБĔР 15 ТУНТИКУН 261 (4773)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Округсенчи суйлав комиççисем ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националънăççен Советне тата Сойуз Советне депутата суйлама кандидатсене регистрацилеççĕ

Стахановла йухăм ўссе тата çĕнтерсе пырать

(„Правда“ умстатйи, 1937 çулхи нойабĕрĕн 14-мĕшĕ)

Промышленнăçри тата транспортри рабочисемпе работницăсен—стахановецсен Кремльре Пĕтĕм Сойузри пĕрремĕш совещанийĕ пулса иртнĕренпе пайан икĕ çул тултарать. Çак совещани пулса иртнĕ çутă та асран кайми кунсем пирĕн çĕршывăн историйе большевисăм çĕнтерĕвĕн праçникĕ, халăх коммунисла партипе, унăн Сталинла Тĕп Комитечĕпе тата Совет правителствипе таччăн пĕрле пулнин аслă та чаплă демонстрацийĕ пулса çирĕппĕн кĕчĕç.

Пирĕн çĕршывра социалисăм çĕнтерĕ никĕс çинче пуçланса кайнă стахановла йухăм, кĕскĕ срукрах вăл кучухнехи чи пурнăçлă та никам чарайми йухăм пулса тăнине кăтартса пачĕ.

1935 çулхи нойаберте, социалисăмла ăмăрту çўлĕрех тапхăра хăпарма пуçланă вăхăтра, Сталин йулташ стахановецсен Пĕтĕм Сойузри пĕрремĕш совещанинче калана сăмахĕнче вăл йухăмăн пахалăхне çак сăмахсемпе палăртрĕ: „Стахановецсем пирĕн промышленнăçра новатăрсем, стахановла йухăм пирĕн индустрин малашлăхĕ пулни, унăн ăшĕнче рабочи клас малашне культурăпа техникă тĕлĕшĕнчен хăпарассин тĕшĕ пурри паллă мар-и вара, стахановла йухăм уçса паракан çулпа пырсан кăна социалисăмран коммунисăма куçма тата пуçпа ĕçлессипе вăйпа ĕçлесси хушшинчи хирĕçлĕхе пĕтерме кирлĕ ĕç тухăçлăхĕн [illegible] мар-и вара?“

Çак сăмахсене каланăранпа иртнĕ икĕ çул хушшинче çакăн пек пахаласа калани ăслăран та ăслă тата тăрăн шухăшлă пулни пĕтĕмпех тĕрĕсе тухрĕ. Çак вăхăт хушшинче ку йăхăма çĕршер пин тата мĕлйуншар çынсем çĕнĕрен хутшăнчĕç, вĕсем куллен кун пĕртте канпаймасăр тата ырă ĕçленипе хамăрăн тăван çĕршывăн аслăлăхĕ ўсет, пирĕн çĕршыв чечекленсе пырать.

Социалисăмпа капиталисăм хушшинчи тĕп ăмăрту хуçалăх тĕлĕшĕпе пулса пынă условисенче ĕçтухăçлăхĕ ўссе пыни—пирĕн ăнăçусен тĕп показателĕ пулса тăрать.

Пирĕн совет рабочийĕ революци пуличченхи вăхăтринчен виçĕ хут тухăçлăрах ĕçлет; 1936 çултах—стахановла йухăмăн пĕрремĕш çулталăкĕнче — пирĕн шултра промышленнăçра ĕçтухăçлăхĕ 21 процент ўснĕ. Стахановецсем ўпĕнтерпĕ кивĕ нормăсене икĕ хут çĕнĕрен пăхса тухнă (пĕлтĕр тата кăçалхи çул). Анчах хальхи нормăсем те чикĕрен инçере тăраççĕ. Рабочисем пит нумайĕшĕ халех ĕнтĕ вĕсене тăтăшах иртерсе тултараççĕ.

Донбасри кăмрăк кăларакан стахановецсемпе ударниксен нумай пулмасть пулса иртнĕ слотĕнче тăтăшах ик-виç ĕç норми тултарса пыракан шахтерсем 14 пин ытла пулнă. Малта пыракан рабочисем ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн пулас суйлавĕ йачĕпе ĕçре чаплă тĕслĕхсем параççĕ: нойабĕрĕн 3-мĕшĕнче Мускаври Орджоникидзе йачĕпе тăракан станкостроителнăй заводри стахановец-фрезеровщик Гудков йулташ сменăра 19 нормă тултарнă; „Новое Сормово“ заводри листоправщик Капкунов йулташ октаберĕн 27-мĕшĕнче сменăра 12 нормă тултарнă. Краснойарскра чукунçул участкинче ĕçлекен каменщик Лукйанов йулташ, виçĕ подручнăйпа ĕçлесе, сменăра 30.100 кирпĕч хунă, çапла вăл кирпĕч хурас ĕçре çĕнĕ рекорд тунă. Каменщик Максименко й-ш (Мускав, Çулйĕр халăх комиссариачĕн трансгражданстройĕ) Лукйанов йулташ тунă рекордран та иртернĕ. Вăл хăйĕн звенипе октаберĕн 26-мĕшĕнче сменăра 49.500 кирпĕч хунă. Кийеври „Большевик“ йатлă машиностройени заводĕнчи токăр—комсомолкă Маруçа Боброва кулленех 3 — 4 нормă тултарса пынă, халĕ, нумай пулмасть, вăл сменăра 6 нормă тултарнă. Кун пек примерсем пит нумай.

Стахановецсене большевиксен партийĕ воспитани панă, ўссе çирĕпленнĕ сталинла ăрувĕ кирек мĕнле йăвăрлăхсемпе чăрмавсене те çĕнтерсе пыма пултарать, —çавна тума стахановла йухăма çирĕн те большевикла йертсе пыни обйазателнă кирлĕ. Тăшмансем хирĕç тăнине çĕнтерсе пынисĕр пуçне стахановла йухăм ўссе пыни пулма пултараймасть. Фашисăма тара кĕрĕшнĕскерсем тата лазутчиксем, троцкисла-бухаринла сăтăрçăсем тискер кайăклах стахановецсене кураймаççĕ. Вĕсем çак хăватлă йухăма арпаштарас тесе, тума тиркесе тăракан ирсĕр преступленисем çук та. Вĕсем темĕн тĕрлĕ ирсĕр майсемпе те — контрреволюцилĕ преде. теорийĕсенчен пуçласа стахановецсене вĕлересси таранах — усă курнă. Большевиксен задачи—стахановецсене тăпмансен ирсĕр тапăнăвĕсенчен сыхласси пулать. Стахановецсем хăйсемех сăтăрлăха çĕнтерме пултараççĕ текен çĕрĕк теорийе тăшмансем, сыхлăха сывратас та сăтăрçăсене рабочи клас диктатури ним хĕрхенўсĕр çапасскинчен хăтарас тесе, шухăшласа кăларнă. Çавăнпа ĕнтĕ стахановла йухăмăн ăнăçлăхĕ пуринчен малтан коммунисен активлăхĕнчен тата айалти хуçалăх руководствин пахалăхĕнчен килет.

Пирĕн хуçалăхри командлă кадрсене халăх пит пысăккăн шанса тăрать тата вĕсем рабочисен хăйсен хăватлă пулăшувĕ çине тайанса ĕçлеççĕ. Стахановла йухăмăн пуçĕнче пулма, стахановецсен опытне сарма тата пĕтĕм предприйатисемпе промышленнăçăн отрăçлисенче производствăлă çĕнĕ ăнăçусем тума пирĕн хуçайственниксен çакна çирĕп ăнланса илес пулать—пурте çынсенчен килет.

Кадрсене тĕплĕн тĕрĕслĕр тата большевикла воспитани парса пырăр, тўрĕ ĕçлекен, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăракан кадрсене малала кăларса тата воспитани парса пырăр, пĕтĕм тасамарлăхпа çĕрĕклĕхе хăйулăн кăкласа ывăтăр,—вара стахановла йухăм çĕнтеретех.

Кашни хуçайственникĕн çакна çирĕп ăнланса илес пулать—пирĕн совет заводĕн техника тĕлĕшĕнче малта тăракан капиталисăмла предприйатисем ĕçленинчен начар ĕçлеме права çук.

Молотов йулташ 1937 çулхи нойабĕрĕн 6-мĕшĕнче Пысăк театрта пулнă чаплă заседанире тунă докладĕнче çакăн пек кăтартса панине пĕтĕм çĕршыв ăнланса илни кирлĕ: „...ССР Сойузĕн чикки леш йенчи çавăн пек заводран сахал мар, а **нумайрах** лайăх продукци паракан завод çеç пирте социалисăмла ĕçлет.

Пирĕн кадрсем ĕнтĕ техникăна вĕренсе алла илес тĕлĕшпе пысăк ăнăçусем турĕç. Çак ăнăçусене тунă май фабриксемпе заводсенче социалисăмла обшчĕствăна тивĕçлĕ çўлĕ ĕçтухăçлăхĕ пулмала тăвас пулать. Вара капиталисăмпа ăмăртакан тĕп фронтра кĕрешў татăклă пулать“.

Стахановецсен совещанинче Сталин йулташ—стахановла йухăм социалисăмран коммунисăма куçма условисем хатĕрлет тесе тата стахановла йухăмра ăспа ĕçлессипе вăйпа ĕçлесси хушшинчи хирĕçлĕхе пĕтермели тĕшĕ пур тесе уйрăмах палăртса каларĕ. Унтанпа иртнĕ икĕ çул хушшинче пирĕн парти тăрăшнипе стахановецсем хăйсен культурăлă тăрăвне куллен кунах ўстерсе пынине, вĕсем хăйсен професийĕн мастерĕсем çеç мар, хуçалăхăн пит ырă организатăрĕсем тата руководителĕсем, çавăн пекех тата государствă дейателĕсем чăннипех пулса пынине пĕтĕм тĕнче курчĕ.

Совет çĕршывĕнчи кашни тўрĕ ĕçлекен çын умĕнче мĕн тери сарлака пурнăç çулĕ уçăлнине стахановла йухăма пуçарса йанă çынсен опычĕ лайăх кăтартса тăрать: вĕсенчен нумайĕшĕ, сăмахран, Стаханов, Концедалов, Бусыгин, Мусински, Одинцова, Демченко т. ыт. те аслă шкулсенче вĕренеççĕ, тата хăшпĕрисем, сăмахран, Изотов, Кривонос, Иусим, Огнев, Сметанин, Шавалова ўссе, çирĕп те пуçарулă хуçайственниксем пулса пыраççĕ.

Вĕсем социалисăмшăн кĕрешекен чăнчăн борецсем пулса тăнине кăтартнă стахановецсенчен нумайĕшĕ çав тери ўссе çитĕнчĕç,—халĕ ĕнтĕ вĕсен ĕçри паттăрлăха пула çўле хăпарнă йачĕсене халăхшăн чи хаклă йатсемпе пĕрле — Сойуз Советне тата Националънăççен Советне депутата суйламали кандидата çырса хунă. Вĕсен хисепĕнче—сталевар Куракин йулташ, машинист Йемцов йулташ, ткачихă Тухватуллина йулташ, лаша кĕтў пăхакан Шаймарданов йулташ тата ытти стахановецсем те—тăван çĕршывăн йатлă çыннисем.

Стахановла йухăм халхи вăхăтра çĕнĕрен пысăк çĕклену туса пырать. Малта пыракан заводсемпе шахтăсенчи рабочисем ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали историлĕ куна çулталăкри плана срукчен тултарнипе кĕтсе илме тăрăшаççĕ. Стахановецсемпе ударниксен Ленин—Сталин партийĕ пуçарса пыракан производствăлă çĕкленўвĕ производствăра çĕнĕрен ăнăçусем тума, Сталинла виççĕмĕш пйатилеткă çулĕсенче социалисăмла хуçалăх малала чечеклене пырассине хатĕрлесе хуракан ăнăçусем тума май парать.

Шупашкар Суйлав Округĕнчи Суйлав Округ Комиççи Националънăççен Советне депутата суйлама

АЛЕКСЕЙ ИВАНОВИЧ СТЕЦКИЙ

кандидатурине регистрациленĕ

ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националънăççен Советне суйламали Шупашкар хула Суйлав Округĕнчи № 496 Округ Суйлав Комиççи йышăннă постановлени

Округ Суйлав Комиççине ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националънăççен Советне депутата суйлама кандидатурăсем тăратни çинчен килнĕ документсене пăхса тухнă хыççăн, Округ Суйлав Комиççи, тăратнă документсем „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин“ 56, 57, 58, 59, 60 тата 61-мĕш статйисемпе пĕтĕмĕшпех килĕшўлĕ пулнине палăртса, çапла йышăнать:

„ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин“ 60-мĕш статйи тăрăх, Шупашкар хула Суйлав Округĕ № 496 тăрăх, ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националънăççен Советне депутата суйлама Водопйанов йачĕпе тăракан заводри, 1-мĕш номĕрлĕ типографкри рабочисен, служăщчисен, инженерла-техникла работниксен тата Ишлей районĕнчи „Клевер“ колхозĕнчи колхозниксен пĕрлехи пухувĕсем (вĕсенче 467 çын пулнă) тăратнă Алексей Иванович Стецкий кандидатурине баллотировкăра пулма регистрацилес; Алексей Иванович Стецкий 1896 çулта çуралнă, ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн членĕ, ПСК(б) Партин Тĕп Комитечĕн агитаципе пропагандă пайĕн пуçлăхĕ, „Большевик“ журналăн редактăрĕ, 1915 çултанпа ПСК(б)П членĕ, Мускав хулинче, Кремльре пурăнать.

„ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин“ 66-мĕш статйи тăрăх, Алексей Иванович Стецкий йулташ кандидатурине ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националънăççен Советне суйламали 496-мĕш номĕрлĕ Шупашкар хула Суйлав Округĕ тăрăх суйлав бўллетенне кĕртес.

„ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин“ 65-мĕш статйи кăтартнă тăрăх, çак постановленине пурне те пĕлтерме пичетлесе кăларас.

Округ Суйлав Комиççи председателĕ **Смирнов.**
Председател заместителĕ **Иванов.**
Секретарĕ **Маточкин.**

Комиççи членĕсем: **Стайнова, Асафйев, Орлова, Моисейева, Глухов, Андрейев, Степанов, Водоватов.**

ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националънăççен Советне суйламали Вăрнар Округ № 504 Суйлав Комиççи

П. И. ПУМПУР йулташа

Националънăççен Советне депутата суйлама кандидата регистрацилесси çинчен йышăннă постановлени

Округ Суйлав Комиççийĕ ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националънăççен Советне депутата суйлама кандидат тăратни çинчен килнĕ документсене пăхса тухнă хыççăн, Округ Суйлав Комиççи, тăратнă документсем „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин“ 56, 57, 58, 59, 60 тата 61-мĕш статйисемпе пĕтĕмĕшпех килĕшўлĕ пулнине палăртса, çапла йышăнать:

„ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин“ 60-мĕш статйи тăрăх ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националънăççен Советне депутата суйлама Елĕкри сĕскантăр заводĕнчи рабочисен, служăщчисен тата инженерла-техникла работниксен Вăрнар районĕнчи Мамалайри Ворошилов йачĕпе тăракан колхозри колхозниксен, Булатоври Молотов йачĕпе тăракан колхозри колхозниксен, Елĕк районĕнчи Йехремкассинчи „Майăн 1-мĕш“ колхозри колхозниксен пĕрлехи пухувĕсем (вĕсенче 392 çын пулнă) тăратнă Петр Иванович Пумпур кандидатурине Вăрнар Суйлав Округĕ тăрăх баллотировкăра пулма регистрацилес; Петр Иванович Пумпур—1900 çулта çуралнă, ПСК(б)П членĕ, Мускаври çар Округĕн Çар Сывлăш вăйĕсен начальникĕ, Мускав хулинче пурăнать.

„ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин“ 66-мĕш статйи тăрăх, Пумпур, Петр Иванович йулташ кандидатурине Вăрнар Суйлав Округĕ тăрăх суйлав бўллетенне кĕртес.

„ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин“ 65-мĕш статйи кăтартнă тăрăх, çак постановленине пурне те пĕлтерме пичетлесе кăларас.

Округ Суйлав Комиççи председателĕ — **Серебренников.**
Председателĕн заместителĕ — **Иварбейев.**
Секретарĕ—**Топриков.**

Комиççи членĕсем:—**Максимов, Йермолайев, Алексейев, Уткин, Йефимов, Йегоров, Дубинин, Гаврилова.**

Улатăр Суйлав Округ Комиççи Националънăççен Советне депутата суйлама

ТАМАРА АЛЕКСЕЙЕВНА МОИСЕЙЕВА

кандидатурине регистрациленĕ

ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националънăççен Советне суйламали Улатăр Суйлав Округ № 503 Суйлав Комиççи йышăннă постановлени

Округ Суйлав Комиççине ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националънăççен Советне депутата суйлама кандидатурăсем тăратни çинчен килнĕ документсене пăхса тухнă хыççăн, Округ Суйлав Комиççи, тăратнă документсем „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин“ 56, 57, 58, 59, 60 тата 61-мĕш статйисемпе пĕтĕмĕшпех килĕшўлĕ пулнине палăртса, çапла йышăнать:

„ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин“ 60-мĕш статйи тăрăх, Улатăр Суйлав Округĕ № 503 тăрăх ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националънăççен Советне депутата суйлама паровозсем йусакан заводри, Улатăрти машинăпа трактор мастерскойĕнчи рабочисен, инженерла техникла работниксен, служăщчисен, Улатăр районĕнчи Стемас йалсоветĕнчи „Путь Ильича“, Кувакинă районĕнчи „Красный передовик,“ „12 лет Октября“ колхозсенчи колхозниксен пĕрлехи пухувĕсем (вăл пухусенче 1771 çын пулнă) тăратнă Тамара Алексейевна Моисейева кандидатурине баллотировкăна тăма регистрацилес: Тамара Алексейевна Моисейева 1915 çулта çуралнă, ПСÇЛКС членĕ, Улатăрти паровозсем йусакан заводра, механический цехра бригадирта ĕçлет, Улатăр хулинче пурăнать.

„ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин“ 66 мĕш статйи тăрăх, Тамара Алексейевна Моисейева йулташ кандидатурине Чăваш республикĕнчĕн Националънăççен Советне суйламали Улатар Суйлав Округĕ № 503 тăрăх суйлав бўллетенне кĕртес.

„ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин“ 65-мĕш статйи кăтартнă тăрăх çак постановленине пурне те пĕлтерме пичетлесе кăларас.

Округ Суйлав Комиççи председателĕ Орепин.
Председател заместителĕ Семенов.
Секретарĕ Агафонов.

Членĕсем: Сомов, Монахов, Беляков, Романов, Бодров, Кошелев, Бурмистров.

Вилкинс каллех Арктикăра вĕçет

Америкă çынни—Арктикăн паллă тĕпчевçи Вилкинс, Леваневски йулташа шырама хутшăнса, „ССР Л-2“ тесе йат панă вĕçекен лодка çинче темиçе хут та Арктикăра вĕçнĕ. Анчах çанталăк сивĕтнĕ пирки унăн вĕçме чăрăйма килнĕ.

Халĕ Вилкинс, Арктикăра вĕçме йатарласа хатĕрленĕ самолйот çинче, каллех Арктикăна вĕçме кайнă. Унăн самолйотне йĕлтĕр çине лартнă.

(ТАСС).

Улатăр Суйлав Округ № 366 Суйлав Комиççи Сойуз Советне депутата суйлама

ЛУКА СЕМЕНОВИЧ СПАСОВ

кандидатурине регистрациленĕ

ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Сойуз Советне суйламали Улатăр Округ № 366 Суйлав Комиççи йышăннă постановлени

ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Сойуз Советне суйламали Улатăр Округ Суйлав Комиççине ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Сойуз Советне депутата суйлама кандидат тăратнă предприйатисенчи рабочисен, служăщчисен, инженерла-техникла работниксен тата колхозниксен пĕрлехи пухувĕсен протоколĕсене пăхса тухнă хыççăн, Улатăрти Суйлав Округ № 366 Суйлав Комиççийĕ, вăл документсем „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин“ 56, 57, 58, 59, 60 тата 61 статйисемпе пĕтĕмпех килĕшўлĕ пулнине палăртса тата кандидат çак округ тăрăх баллотировкăра тăма килĕшў панине шута илсе, çапла йышăнать:

„ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин“ 60-мĕш статйи тăрăх, Улатăр Суйлав Округĕ № 366 тăрăх ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Сойуз Советне депутата суйлама Улатăрти махоркă совхозĕнчи, Улатăрти 8-мĕш № лĕхăма çуракан заводри, Чăвашвăрман промышленнăç тресĕнчи, Улатăр станцин паровозсем йусакан пайĕнчи тата Депори рабочисен, инженерла-техникла работниксен, Улатăр районĕнчи Иваньково-Ленский йалсоветĕнчи „Красный луч“ колхозри колхозниксен, Турхан районĕнчи „Октябрь“, „Трудовик“ колхозсенчи колхозниксен, Парачкав районĕнчи Полибин йалсоветĕнчи „Первомайски“ колхозĕнчи колхозниксен пĕрлехи пухувĕсем (весенче 967 çын пулнă) ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Сойуз Советне депутата суйлама баллотировкăна тăма Лука Семенович Спасов кандидатурине регистрацилес; Лука Семенович Спасов 1899 çулта çуралнă, ПСК(б)П членĕ, ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ, Шупашкар хулинче пурăнать.

„ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин“ 66-меш статйи тăрăх, Лука Семенович Спасов кандидатурине Улатăр Суйлав Округ № 366 тăрăх суйлав бўлетенне кертес.

„ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин“ 65-мĕш статйи тăрăх, çак постановленине пурне те пĕлтерме пичетлесе кăларас.

Округ Суйлав Комиççи председателĕ А. Кузьмин.
Округ Комиççин председателĕн заместителĕ Ф. Д. Степанов.
[illegible]
К. Г. Тришкин.

Округ Комиççи членĕсем: Ф. Г. Наумов, А. И. Брейкин, Д. А. Андрейев, И. Е. Свешников

ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националънăççен Советне суйламали Йĕпреç Округ № 501 Суйлав Комиççи

СЕРГЕЙ КСЕНОФОНТОВИЧ КОРОТКОВ йулташа

Националънăççен Советне депутата суйлама кандидата регистрацилесси çинчен йышăннă постановлени

Округ Суйлав Комиççине ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националънăççен Советне депутата суйлама кандидат тăратни çинчен килнĕ документсене пăхса тухнă хыççăн, Округ Суйлав Комиççи, тăратнă документсем „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин“ 56, 57, 58, 59, 60 тата 61-мĕш статйисемпе пĕтĕмĕшпе килĕшўлĕ пулнине палăртса çапла йышăнать: „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин“ 60-мĕш статйи тăрăх, Йĕпреç Суйлав Округĕ № 501 тăрăх ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Националънăççен Советне депутата суйлама Пăвари хăма çуракан заводри, Йĕпреçри кирпĕч заводĕнчи, „Красный строитель“ промертелри рабочисен, служăщчисен, инженерла-техникла работниксен тата Йĕпреç районĕнчи „Молния“, „Красный фронтовик“, Калинин йачĕпе тăракан, „Красный восток“, „Красный Октябрь“, Сталин йачĕпе тăракан, „Костер“, „Большевик“ колхозсенчи колхозниксен пĕрлехи пухувĕсем (вăл пухусенче 1356 çын пулнă) тăратнă Сергей Ксенофонтович Коротков йулташ кандидатурине Йĕпреç Суйлав Округĕ № 501 тăрăх баллотировкăна тăма регистрацилес; Сергей Ксенофонтович Коротков 1908 çулта çуралнă, ПСК(б)П членĕ, Вăрнар районĕнчи Сталин йачĕпе тăракан колхоз председателĕ, халь ЧАССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателĕн заместителне суйланă, Вăрнар районĕнче Кольцовкă йалĕнче пурăнать.

„ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин“ 66-мĕш статйи тăрăх, Сергей Ксенофонтович Коротков кандидатурине Йĕпреç Суйлав Округĕ № 501 тăрăх суйлав бўллетенне кĕртес.

„ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин“ 65-мĕш статйи кăтартнă тăрăх, çак постановленине пурне те пĕлтерме пичетлесе кăларас.

Округ Суйлав Комиççи председателĕ **Чернов.**
Председател заместителĕ **Кольцов Йе. Г.**
Секретарĕ **Андрейев П. Р.**

Членĕсем: **Йурмин, Йефремов, Антонов, Захарова.**

Националънăççен Советне суйламали Патăрйел Округ Суйлав Комиççи Националънăççен Советне депутата суйлама кандидата

ОЛЬГА ТИХОНОВНА ХАРИТОНОВАНА

регистрациленĕ

Патăрйел, нойабĕрĕн 13-мĕш (телефонпа). Ĕнер Националънăççен Советне суйламали Патăрйел Округ Суйлав Комиççин ларувĕ пулса иртрĕ. Ларура Националънăççен Советне депутата суйлама тăратнă кандидата регистрацилес ыйту тăчĕ. Комиççи суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи пухусенче Патăрйел, Шăнкăртам тата Йелчĕк районĕсенчи колхозниксемпе колхозницăсен тата учителсен пĕрлехи пухувĕсем Патăрйел районĕнчи чи лайăх учителницăна Харитонова Ольга Тихоновнăна Националънăççен Советне депутата суйлама кандидата тăратнă материалсене пăхса тухрĕ. Комиççи суйлав Положенин 61-мĕш статйи тăрăх, Харитонова Ольга Тихоновна йулташа Патăрйел Суйлав Округĕ тăрăх Националънăççен Советне депутата суйлама баллотировкăра пулма регистрацилес тата суйлав бўллетенне кĕртес, тесе йышăнчĕ.

Рабочисемпе Хресченсен Милицин милиционерĕсене тата начальство составне ССР Сойузĕн орденĕсене панă

1937 çулхи нойабĕрĕн 12-мĕшĕнче Рабочисемпе Хресченсен Милицине организацилени çирĕм çул тултарчĕ. Рабочисемпе Хресченсен Милицийĕ социалисăмла харпăрлăха тата революцилĕ йĕркелĕхе сыхлас ĕçре тава тивĕçлĕ паллă çитĕнўсем турĕ. Çакна май ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ Рабочисемпе Хресченсен Милицинчи палла тухнă милиционерĕсене тата начальство составне ССР Сойузĕн орденĕсене памала туса постановлени йышăннă.

Милиционерсемпе начальство составĕнчи 73 çынна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ, 260 çынна—Знак Почета орденĕ панă.

(ТАСС).

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн заседанийĕ

Нойабĕрĕн 10-мĕшĕнче ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн черетлĕ заседанийĕ пулса иртнĕ. Заседанийе В. М. Молотов йулташ йертсе пынă.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Йăвăр промышленнăç халăх комиссариачĕн положени тата структури çинчен Йăвăр промышленнăç Халăх Комиссарĕн Л. М. Каганович йулташăн докладне итлесе сӳтсе-йавнă. Халăх комиссарначĕн Каганович йулташ тунă положенипе структуринче тĕп вырăна—Халăх Комиссариатне тата унăн тĕп управленисене предприйатисемпе чĕрĕ çыхăну тытмала тăвас, чăннипех куллен оперативлă, çавăн пекех техникла йертсе пымала тăвас задачăна хунă. Çав тĕллевпе çĕнĕ положени Йăвăр промышленнăç халăх комиссариачĕн тата унăн тĕп управленисен центрти аппаратне тĕпрен урăхлатса çĕнетме палăртат. Партин 17-мĕш сиесĕ организацилĕ ыйтусем пирки йышăннă решенисем тăрăх çакăн пек урăхлатса çĕнетни—Йăвăр промышленнăç халăх комиссариатĕнче, унăн тĕп управленисенче ку таранччен пулнă функционалкăна пĕтермелле, центрти аппарата предприйатисем патне çывхартмала. Çакна май тĕп управленисен шалти структурисене производствăлă-территорилĕ принцип тăрăх урăхлатса çĕнетмелле. Ку таранччен Йăвăр промышленнăç халăх комиссариачĕн пур тĕп управленисенче те производствăлă експлоатаци тĕллĕшпе ĕçлекен функционалă пайсем тĕп вырăнта тăнă. Çав пайсем хăйсем те функционалă принцип тăрăх пайланнă. Тĕслĕхрен, металлурги промышленнăçĕн тĕп управленийĕн (ГУМП) составĕнче доменнăй цехсен группи, прокат группи, пăха хурçăсен группи пулнă, çаксенчен кашни группи металлурги промышленнăçĕн тивĕçлĕ пайне пĕтĕм Совет Сойузĕнче тытса тăнă, анчах çак пашкал группă пĕрлĕхлĕ комплекс пулса тăракан заводпа çыхăну тытма пултарайман.

Çĕнĕ структурă тăрăх, тĕп управленисенче пуринче те производствăлă-распорйадительнăй группăсем тăвассĕ. Çак группăсем тивĕçлĕ территорири предприйатисене—вĕсен пĕтĕм ĕçĕсене йертсе пыракан пулассĕ. Предприйатисемпе организацисем çумне вĕсемпе тачă çыхăну тытма, вĕсене пур майсемпе те пулăшма, куллен тĕрĕслесе пыма, предприйатисен ĕçĕсене куллен хутшăнма инженер-диспетчерсен çĕнĕ институтне тăвассĕ. Тĕп управленисенче пуринче те техникăла пайсем тăвассĕ. Вĕсем çине предприйатисем производствăла-техникăла ĕçĕсен опытне пĕрлештерес, техникăла ыйтусене пăхса тухса хатĕрлес, техникăла експлоатаци правилисене тăвас, оборудованисемпе усă курас тĕллĕшпе ĕçлес, çавсене пурнăçа кĕртессине тĕрĕслесе тăрас, аварисен сăлтавĕсене анализ тăвас ĕçсене хурассĕ. Кунсăр пуçне, тĕп управленисенче те рабочи кадрсен тата ĕçукçи сектăрĕсене çĕнĕрен тăвассĕ. Вĕсем ĕçтухăçлăхне ӳстерме, стахановла йухăма сарма май паракан, рабочисене организацилĕ пухас, рабочисен кадрĕ улшăнса тăрассине пĕтерес, ĕçе тата ĕçукçине нормăлас, ĕçе тĕрĕс организацилес тĕллĕшпе ĕçлессĕ.

Тĕп управленисене предприйатисем, стройкăсем патне çывхартас тĕллĕшпе Йăвăр промышленнăç халăх комиссариачĕн системинче çĕнĕрен вунă тĕп управлени тăвассĕ. Çакна май ку таранччен пулнă вуниллĕк треста пĕтерессĕ. Уйрăмăн илсен, çакнашкал пысăк тĕп управленисене, металлурги промышленнăçĕн тĕп управленине, тĕслĕ хурçăн тĕп управленине пĕчĕклетессĕ. Металлурги промышленнăçĕн тĕп управлени (ГУМП) халиччен хура металлурги заводĕсемпе çеç мар, хура металлургипе çыхăннă чылай предприйатисене (руда промышленнăçĕ, огнеупорнăй, коксла хими, труба тăвакан заводсем) йертсе пынă. Халĳхи вăхăтра металлурги промышленнăçĕн тĕп управленине пĕчĕклетнĕ, унтан çĕнĕрен пилĕк тĕп управлени тунă. Йăвăр промышленнăç халăх комиссариатĕнче пурĕ производствăла-отраçĕллĕ 33 тĕп управлени пулат. Кунсăр пуçне, положени пройекчĕ, халăх комиссариачĕн составĕнче техникăлă пысăк ыйтусем тăрăх халăх комиссарне експертизă тата заключени паракан техникăла совет, халăх комиссарĕ çумĕнче контроль-инспектăрлă ункăн, план, финанс, учот, кадрсене суйласа илекен, рабочисен кадрĕ, ĕçукçи, капитальнăй строителствă сектăрĕсем, пурăнмали суртсем тĕллĕшпе ĕçлекен пай тума палăртнă.

Йăвăр промышленнăç халăх комиссариачĕн тата унăн тĕп управленисен центрти аппаратне урăхлатса çĕнетме палăртни пысăк вырăнта тăрат, вăл хуçалăхла, уйрăмах промышленнăçла халăх комиссариачĕсен ĕçĕсене çĕнелле йĕркелес ĕçре пример пулмала. Тĕп управленисенче призводствăлă—распорйадительнăй тата техникăла пайсем туни, инженерсен—диспетчерсен институтне туни, тĕп управленисене тата халăх комиссариачĕсене промышленнăçăн призводствăла-техникла штабĕ туса хурассине васкатат, предприйатисенчи инженерсемпе техникла тата хуçалăх работникĕсене йертсе пыракан аппарат туса хума, çавăн пекех тата предприйатисене халăх комиссариачĕн аппаратĕнче управлени шкулĕнче ĕçлесе писнĕ работниксемпе çирĕплетме май парат.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Каганович йулташ Йăвăр промышленнăç халăх комиссариачĕ çинчен тăратнă положенине çирĕплетнĕ.

Кун хыççăн, Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Совет Контроль Комиссин учреждени, предприйати, хуçалăх, строителствă организацисен руководителĕсене улăштарнă чухне ĕçе парса-илес ыйту тăрăх З. М. Беленький йулташ докладне итленĕ.

Практикă çакна кăтартса парат: чылай çĕрте ĕçе парса-илесси çине çиеltен пăхассĕ, ун çине формальнăй ĕç çине пăхнă пек пăхассĕ. Халăх комиссариачĕсемпе ведомствăсен руководителĕсем çак пысăк ĕçĕн айаккинче тăрассĕ, çак ĕç государствă дисциплинине çирĕплетес тата руководителĕсен ответлăхне ӳстерес ĕçре пысăк вырăнта тăнине хака хумассĕ.

Совет Контроль Комиссии тăратнă пройект халăх комиссариачĕсемпе ведомствăсем çине ĕçе парса-илессипе тĕрĕс организацилессишĕн ответлăх хурат. Унччен руководитель пулнă ĕçсене çĕнĕ руководителе панă чухне халăх комиссариачĕн çӳлте тăракан тивĕçлĕ органăн представителĕ обиазательнă пулмала.

Пройект çӳлте тăракан органсен представителĕсен ĕçе парса илни çинчен çырнă актăна хăйсене пăхса тухма, палăртнă çитменлĕхсене пĕтерме, айăплă çынсене ответ тыттармала тума палăртат.

Совет Контроль Комиссии çине çӳлте тăракан органсене пăхăнса тăракан предприйатисемпе учреждениисенче ĕçе парса-илессине тĕрĕс организацилеине йалан тĕрĕслесе тăрас ĕçе хунă.

Совет Контроль Комиссин пройектне сӳтсе-йавсан, ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ З. М. Беленький йулташа çак заседанире каланă шухăшсене шута илсе, пройекта тĕплĕн тума хушнă.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ пройектсемпе сметăсене тепĕр хут шута илсе тухасси мĕнле пыни çинчен сӳтсе-йавнă.

ССР Сойузĕнчи Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 çулти февралĕн 13-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, 1937 çула куçакан пур строителствăсен сметисене те 1936 çулти декабĕрĕн 1-мĕшĕнчи хаксем тата нормăсем тăрăх шутласа тухмала пулнă.

Шутласа тухассин тĕп задачи—сметăсене тĕрĕслесе тухасси, вĕсене тунă чухнехи йăнăшсене тӳрлетесси, уйрăм сметăсенчи ытлашши расходсене пĕтерессн, пĕр пек виçесем (1936 çулти декабĕрĕн 1-мĕшĕнче пулнă нормăсем,. хаксем) тăвасси пулнă.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ сметăсене тепĕр хут шутласа тухасси мĕнле пыни çинчен сӳтсе-йавсан, халăх комиссариачĕсемпе центрти учрежденисене сметăсене тепĕр хут шутласа тухас ĕç вăраха кайнине пĕтерме, çак ĕçе кашни стройкă тăрăх уйрăммăн йалтах туса пĕтермели ĕçсен срукне тĕплĕн палăртса çирĕплетме ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тăратма хушнă.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ пĕр вăхăтрах промбанка тĕрĕс мар тата ытлашши расходсем пулмала мар тĕллĕшпе йатарласа уйрăм ĕçсем тума тивĕçлĕ пройектсемпе сметăсене пăхса тухассине васкатас тĕллĕшпе хăйĕн сĕнӳне пама хушнă.

Кунсăр пуçне ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Чубарь йулташ тăратнă 1938 çулти йанварĕн 1-мĕшĕ тĕлне Пĕтĕм Сойузĕпех выльăх-чĕрлĕхсене шута илсе тухмали постановлени пройектне пăхса тухнă.

Выльăх-чĕрлĕхсене кашни çулах пĕтĕм ССР Сойузĕ тăрăх шута илсе тухни çĕршывра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли кирлĕ ĕçсенчен пĕри пулса тăрат. Çак переписĕ туса выльăх-чĕрлĕх мĕн чухли çинчен пухнă сведенисем совхозсемпе колхозсем патшалăх выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме панă плана мĕнле тултарнине пĕлме, çитес çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕллĕшпе план тăрăх тата оперативлă ĕçлеме май парат.

Выльăх-чĕрлĕхсене шута илсе тухмали Пĕтĕм Сойузри çитес перепис иккĕмĕш пйатилеткă планне тултарнине итог тумала, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмели иккĕмĕш пйатилеткă планне тума кирлĕ материалсем памала.

Выльăх-чĕрлĕхсене шута илсе тухмали Пĕтĕм Сойузри перепис çинчен Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановленире переписе вăхăтра хатĕрленсе тĕрĕс иртерме кирлĕ практикăлă ĕçсене палăртса хунă.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ сойузлă тата автономлă республикăсенчи Халăх Комиссарĕсен Совечĕсене, край, облаç тата район ĕçтăвкомĕсене, хулапа йал совечĕсене, çавăн пекех хула йышши поçолкă совечĕсене выльăх-чĕрлĕхсене шута илсе тухмали çитес перепис çинчен халăха ăнлантарса пама, халăх хуçалăх учочĕн тĕп управленине переписе иртерме тĕр[illegible]ленĕ тата хатĕрленнĕ работниксем пама хушнă.

(ТАСС).

Çапла кĕтсе илеççĕ Аслă Совет суйлавне...

Пĕчĕкех пулман Чурачкă йалĕ. Вăл чылай таврари йалсемшĕн паллăрах вырăн йышăнса тăнă. Анчах вăл йалта тискерлĕ ĕçсем пулнипе çеç паллă пулнă. Унта халăха сиенлĕ кӳрекен тĕн сĕрĕмне саракан чиркӳ, кулаксем тытса тăракан хупахсемпе лавкасем тата вулăс кантурĕ пысăк вырăн йышăнса тăнă.

Пасар пулнă кун—темĕн чухлĕ çапăçусем пулса иртнĕ. Чурачкă йалĕнчи куштансем таврари йалсенчи çынсене нимĕн сăлтавсăрах хĕненĕ, хупса лартнă, çаратнă, ĕçтерме ыйтнă.

Йалта Кузьмич, Микишкă тавраşĕсем пуç пулса пурăнса, мĕн тăвас килнĕ, çавна тунă. Тĕрлĕ налогсем килсен хăйсем тӳлемесĕр чухăнсене çеç тӳлетĕрмеле тутарнă. Мĕн пур пăха çĕрсем пуйансен аллинче. Чухăнсен вара—хăйăрлă та тăмлă çĕр. Вăл çĕр çинче вĕсем ĕçленĕ, чаваланнă, анчах тырă пиtĕ сахал туса илнĕ.

Йалта хура пӳртсем темĕн чухлех пулнă, вĕсенче чухăнсем пурăннă. Пӳрт-çурт, выльăх-чĕрлĕх мар, пайан пурăнмалăх апат пултăр,—тенĕ унчухне.

Йалта вĕреннĕ çынсем йалĕпе те 2—3 çын çеç пулнă. Пуçламĕш шкул пулнă пулсан та, унта чухăнсемпе вăтам хресчен ачисем вĕренме пултарайман.

Çапла, нумай çулсем хушши хĕн-хур курса, нушалă пурнăçпа пурăннă хресченсем. Вĕсем лайăх пурнăçшăн кĕрешнĕ. Хăшпĕр чухне пуйансемпе çапăçусем те кăларнă. Анчах вĕсене часах пусарнă, арĕсленĕ.

Совет влаçĕ пулнă хыççăн çеç Чурачкă тĕксĕм йалне хĕвал ăшшăн пăхрĕ. Пайан ĕнтĕ унăн сăн-сăпачĕ йалтах урăхла. Хресченсем колхоза пĕрлешсе, пуйан та культурăлă пурнăç çулĕ çине тăчĕç. Колхозниксем вăйлă тăрпулшăн агротехникăлă ĕçсене пĕтĕмĕшпех пурнăçласа пырса, машинăсемпе ĕçлесе вăйлă тырпул туса илеççĕ. Çак ĕçсене пурнăçланине пула ĕнтĕ ĕлĕк темиçе ĕмĕрсем хушши тырпул пулман çĕрсенченех халĕ гектартан 100 пăтран кайа мар тĕш-тырă туса илеççĕ. Кăçал „Броневик" колхозăн кашни ĕçкунĕ пуçне 25 кĕренке тĕштырă, 10 кĕренке çĕрулми тата укçан тивет. Çапла колхозра хастарлă ĕçлекен колхозник çемйисем 500—600 пăт таран тĕштырă илеççĕ.

Йалта халĕ: електростанци, вăтам шкул, больницă, сельмаг, вулав çурчĕ т. ыт. те пур.

Халĕ йалта аслă шкул пĕтернисем 12. Вĕсенчен врач, учитĕл, редактăр т. ыт. те. Йалти вăтам шкулта 150 ача ытла вĕренеççĕ.

Колхозниксен культурлăхĕ темиçе хут та ӳсрĕ. Кăçал 24 колхозник çĕнĕ пӳрт лартнă. Икĕ колхозникĕн велосипед, пĕр колхозникĕн патефон, 30 колхозникĕн сăмавар, 19 колхозникĕн çĕвĕ çĕлемели машинă, кашни килрен пекех сехетсемпе куçкĕскисем пур. Тата чӳречесем çинче чечексем ӳсеççĕ.

Акă, Матвейева Перасковйа колхозницă хăйĕн пурнăçĕ лайăхланни, тулли пурнăçпа пурăнма пуçлани çинчен çапла калаçа парат:

— Халĕ ĕнтĕ епĕр те лайăх пурнăçпа пурăнма пуçларăмăр. Ĕлĕкхи вăхăтра пулсан, мантан, хĕрарăм вĕççĕн пурăнакантан, пӳрт лартасси нийепле те пулас çукчĕ. Халĕ епĕ тăрăшса ĕçленипе çĕнĕ пӳрт лартрăм. Акă кĕçех манăн пӳрте те електричествă кĕртсе парĕç,—тет савăннипе.

Çапла пуйан та культурлă пурнăçпа кĕтсе илеççĕ Чурачкă йал çыннисем ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали çĕнĕ суйлава.

С. Павлов.

Колхоза кĕреççĕ

Хĕрлĕ-Чутай районĕнче халиччен колхоза кĕмесĕр тăнă йединоличниксем халь, Аслă Совета суйламали Положенине ăнлантарса панă хыççăн, колхоза кĕме зайавленисем пама пуçларĕç. Çак кунсенче Ишеккассинчи „Великан" колхоза 4 хуçалăх, Мăн-Йамашри „Шуçăм" колхоза 4 хуçалăх кĕчĕç.

Сатур.

Куславкка комбинатĕнчи Никифоров стахановец çурчĕ.Ăна комбинат стахановла ĕçленĕшĕн туса панă.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Çамрăк красноармейецсем

(Красноармейец çырăвĕ)

Подйом ултă сехетре пулчĕ. Нумай та вăхăт иртмерĕ, ĕнер çеç Хĕрлĕ çар ĕретне килнĕ çамрăксем команди-командипе физкультурă плошчадкине чупса тухрĕç. Вĕсен пайан çĕнĕ пурнăç. Хĕрлĕ çарти пурнăçĕ пуçланчĕ.

Ĕнер вĕсем кашни хăйне йевĕрлĕ тумтирпе пулнă. Пĕрне-пĕри тумран палласа илме пултарнă. Пайан вĕсем пĕрне-пĕри тумран палласа илеймеççĕ. Пурин çинче те пĕр пек тум: кăвак петлицăлă симĕс гимнасторкă, хура-кăвак шльом, хура шалавар тата сăран атă.

Труках çирĕп дисциплинăлă пурнăçа кĕрсе ӳкни вĕсене нимĕн чухлĕ те пăшăрхантармаст, вĕсем уншăн савăнаççĕ, тахçантанпах кĕтнĕ вĕсем çакă паллă куна. Хĕрлĕ çарти йĕрке çынна типтерлĕ, дисциплинăлă, йĕркелĕ, çирĕп кăмăллă тата паттăр пулма вĕрентет.

Кунта тĕрлĕ çĕртен килнĕ çынсем. Вырăс, чăваш, тутар, мордва, марийец, грузин, украинец,—пурте пур. Пирĕн Хĕрлĕ çар нумай нацисенчен чăмăртанса тăракан вăйлă çар. Аслă Совет çĕршывĕнчи пур халăх та тăван çĕршыва пĕр пек йуратат. Мĕншĕн тесен, пирĕн телейлĕ çĕршывра пур халăх та пĕртан, пĕр пек мухтавлă пурнăçпа пурăнат. Нацине нацин кураймасăр пурăнассине 20 çул кайалах тĕп тунă.

Кăнтăрлахи занятисене пĕтернĕ хыççăн çамрăк красноармейецсем пурте клуба пухăнса ларса, Хĕрлĕ çара киличчен кам ăçта ĕçлени çинчен калаçма пуçларĕç.

— Пире колхоз питĕ савăнăçлăн ăсатрĕ. Çара киличчен епĕ колхозра стахановец пулса ĕçлерĕм. Кăçал 450 ĕçкунĕ турăм,—тет Чăваш республикĕнчен килнĕ Семенов красноармейец.

— Епĕ те çара киличчен 420 ĕçкунĕ туса хăвартăм. Пирĕн килйыш пуйан пурнăçпа пурăнат. Манăн велосипед, икĕ ретлĕ купăс, çĕнĕ пальто, çĕнĕ костюм пур. Пирĕн Ворошилов йачĕпе тăракан колхозăн 2 автомашинă, пысăк клуб, трахпункт, шкул пур,—савăнăçлăн калаçат унăн йулташĕ Иванов та.

Ивашкин йулташ Хĕрлĕ çар ĕретне киличчен учитĕл пулса ĕçленĕ. Ăна çар службинчен хăтарма льгота пана пулнă. Вăл йышăнман. Хăйĕн ирĕкĕпе Хĕрлĕ çара килнĕ.

— Сталинла Конституци тăрăх, Хĕрлĕ çарти служба пирĕншĕн хисеплĕ тивĕç пулса тăрат. Манăн сывлăх пур çĕртех Хĕрлĕ çар службинчен йулас килмерĕ, тет Ивашкин йулташ.

Çамрăк красноармейецсем пурте Хĕрлĕ çара килме йурăхлă пулнишĕн савăнаççĕ. Вĕсене çар чаçĕнче ăшă кăмăлпа, музыкăпа кĕтсе илнĕ, хавхалантарат. Вĕçем килнĕ çĕре пурне те хатĕрлесе хунă. Помещени таса, усă, çутă. Пуша вăхăтра выльăма—шашкă, шахмат, биллиард пур, вулама—кĕнекесем, хаçат-журналсем çителĕклĕ. Ултă кунта пĕрре йе иккĕ хут кино-картинă кăтартаççĕ. Кусемсĕр пуçне, час-часах пултарулăх вечĕрĕсем пулаççĕ.

Пайан вĕсем Хĕрлĕ çар клубĕнче пĕррĕмĕш хут „Северный полюс" кино-картинăна курчĕç.

Ф. Козлов.

3. Социалисăм йалта çĕнтерни*)

Вырăс йалĕ патша самодержавийĕ вăхăтĕнче

„Йăвăçран тунă Российă", „Улăм витнĕ Руç" тесе йат панă вырăссен чи лайăх писатĕлĕсем кивĕ, революцичченхи Российăна. Вырăс художникĕсем те йалти чалăшса ларнă кил-çуртсене сăрласа кивĕ, патша Российĕнчи чухăнлăха, тĕттĕмлĕхе кăтартса панă.

Выçлăх çулсенче пӳрт çине витнĕ улăма выльăхсене çитерсе йанă. Выçлăх, тиф, цынга, тата ытти чирсем кĕпернин-кĕпернипе, крайĕ-крайĕпе сарăлнă. Çулахи шăрăх кунсенче йал урамĕсем тăрăх „хĕрлĕ автан" çӳренĕ, йалĕ-йалĕпе, вулăс-вулăсĕпе нимĕн йулмиччен çунтарса йанă.

Акă мĕнле каласа кăтартассĕ кивĕ йал çинчен мужиксем паллă поет Некрасовăн произведенийĕнче:

...Пирĕн пĕр хуйхă пур.
Мăнтарăн çав хуйхăмăрçăм
Хăваласа йачĕ килтен.
Еçрен уйăрчĕ пирĕ;
Пăрахтарчĕ апат çиме...
Туртнă-çыхнă кĕпернери
Çуклăх-пушлăх вулăссенчи
Вăхăтлăха — обиазаннăй
Йĕркелĕ мужиксем, епĕр,
Çак жӳрнĕ йалсенчен:
Тутăмар йалĕнчен, Çимен йалĕнчен,
Саплăк йалĕнчен, Çĕтĕк-çурăк йалĕнчен,
Çунăк йалĕнчен, Выçлăх йалĕнчен,
Тырпулман йалĕнчен те.

Чиркӳ хресчене кашни утăмрах сăмаса тăнă, мужике патшана, помещике, урйадникĕ пăхăнтарса ӳсрасшăн, вăхăтра хырçă тӳллетерсшĕн, хăйне пусмăрлакансемпе ултавакансене—улпута, пупа пуйтарасшăн тăрăшнă.

Хресченсене самодержави йĕркине пĕтĕмпех пăхăнтарса тăма, тата крепостник-помещиксемшĕн вĕсене пĕтĕмпех пăхăнтарса тăма çăмăлрах пултăр тесе, патша влаçĕ йала тĕттĕмлĕхре, чĕмсĕрлĕхре усранă, унта хупахсем лартса тултарнă.

Патша шухăшĕпе, хресченсем самодержави пусмăрĕн тата шултăра çĕр хуçисен — дворйансен експлоатацине пĕр ӳпкевсĕр чăтма пултаракан пăхăнулă та чĕлхесĕр „ĕç выльăхĕ" пулнă.

Анчах патшапа помещиксен шухăшĕ пурнăça кĕреймен. Ĕçхресченĕсем патшапа помещиксен пусмăрне хирĕç кĕрешнĕ, налогсене тата вăрă-хурахла арендă тӳлевĕсене парасшăн пулман, помещиксене хирĕç восстанисем тунă, вĕсен çурт-йĕрĕсене тустарнă, рабочисене самодержавипе капиталиссене кĕрешме пулăшнă.

Хресченсен помещиксене хирĕç пынă кĕрешĕвĕ, пуринчен малтан, çĕршĕн пынă кĕрешӳ пулнă. Хăйсен пурнăçне аванлатма хресченсене сухаламали, акмали çĕр кирлĕ пулнă. Анчах чи аван çĕрсене помещиксем тытса тăнă. 28 пин шултăра тата вăтам çĕр хуçисем хăйсен аллинче 10 мĕлйун хресчен хуçалăхĕсем тытса тăнă чухлĕ çĕр тытса тăнă. 28 пин помещикĕн 62 мĕлйун теçетин, 10 мĕлйун хресчен килĕсен 73 мĕлйун теçетин çĕр пулнă. Хресченсен çĕрĕ начар пулнă, лайăх çĕрсем помещиксен аллинче пулнă. Хресченсен нимĕн сухалама кăна мар, сухалама та нимĕнлĕ хатĕр те пулман. Хресчен хуçалăхĕсенчен çурри ытла лашасăррисем, йе вĕсен пĕрер ырхан лаша кăна пулнă. Ĕçхатĕрĕсем начар, йăвăç сухапуçĕ тата сайра хутра кăна плуг пулнă. Лаша, плуг тата кăшт çĕр кирлĕ пулсан, чухăн хресченĕн помещик йе кулак патне пымала пулнă. Анчах експлоататăрсем хресченсенчен çичĕ тир сӳнĕ: вĕсене хăйсен уйхирсенче ĕçлеттернĕ, кулак йе помещик лашипе, плугĕпе, сӳрипе, вăрлăхĕпе вăхăтлăха усă курнăшăн виçĕ хак тӳллеттернĕ. Ку ĕнтĕ хресченсене мăшкăллă пусмăра кĕртсе йанă, тусăнтарнă. Помещиксемпе кулаксем хресченсене ыйткалакана кăларса йанă.

Хресченсем Российăра помещиксене хирĕç нумай восстанисем тунă. Анчах патша çарĕсем çав восстанисене хăйăрран пусара-пусара лартнă. Вырăс патшисем помещиксен интересĕсене сыхланă, хресченсене пăвса пурăннă, мĕншĕн тесен патшасем хăйсем те чи шултăра помещиксем пулнă. Вырăссен йулашки патша тата унăн тăванĕсем пĕр Йевропăри Российăра кăна 8 мĕлйун гектар çĕр тытса тăнă. Кунсăр пуçне вĕсен Çĕпĕрте тата Инçетри Хĕвелтухăçĕнче пысăк çĕрсем пулнă. Патша самодержавийĕ помещик-крепостниксен влаçĕ пулнă, вăл çав влаçа сирпĕтсе антарма тăрăшнă рабочисемпе хресченсене хирĕç йунлă çапăçу туса кĕрешнĕ.

Патшапа помещиксем пуçпулса тăрассине пĕтерсе хума хресченсен хăйсенех вăй çитмен. Ĕççынниcен чи организациленнĕ, ăстăнлă тата революцилĕ отрйачĕ пулса тăракан рабочи клас анчах хресченсене пĕрлештерсе, патшана, помещиксене тата капиталиссене хирĕç çĕнтерӳлĕ кĕрешĕве илсе кайма пултарнă. Рабочи клас патша влаçне хирĕç кĕрешӳре хулари тата йалти пĕтĕм ĕççыннисене пĕрлештернĕ, хресченсемпе çирĕп сойуз тунă, самодержавийе, капиталиссене тата помещиксене хирĕç тăнă ĕççыннисене кĕрешӳре йертсе пынă, çав кĕрешӳре çĕнтернĕ. 1917 çулти февральте самодержави, çавăн хыççăн октăбĕрте капиталиссемпе помещиксен влаçне сирпĕтсе антарса, рабочисемпе хресченсем çĕре уйрăм хуçасем тытса тăрассине пĕтерсе хучĕç, помещиксен аллинчен çĕре туртса илчĕç те, хресченсене помещиксен експлоатацинчен ĕмĕрлĕхех хăтарчĕç.

Колхоз çулĕ—социалисăм çулĕ

Мĕн тума туртса илнĕ рабочисемпе хресченсем помещиксен çĕрĕсене, çурт-йĕрĕсене, ĕçхатĕрĕсене, тата ĕç выльăхĕсене? Çак пурлăха хресченсем хушшинче валеçсе: ан тив, хресченсем кивĕлех, уйрăм çуртсемпе вакран та вак хуçалăхсемпе пурăнччăр, ан тив, хăшĕ вăйлăрах, чĕрĕрех те пусмăрлăраххи тепĕр вăйсăрри чухăнни шучĕпе ӳссе ытăр; ан тив кулаксем ĕлĕкхи пекех чухăнсене пăвччăр, вĕсен карланкисенчен йарса илччĕр, мăшкăллă пусмăра сĕтĕрччĕр; ан тив кулаксем ӳссе, пуйса пычччăр, çурма-помещиксем, помещиксем пулса тăччăр тесе йалта кивĕ йĕркесене хăварма тумап ĕнтĕ.

Паллах, рабочисемпе хресченсем помещиксен тата капиталиссен влаçне çакăншăн мар сирпĕтсе антарнă, фабрикăсене, çĕрсене, помещиксен çĕрĕсемпе çурт-йĕрĕсене туртса илнĕ. Рабочисемпе хресченсем совет влаçне пур тĕрлĕ пусмăра, пур тĕрлĕ експлоатацийе, апла пулсан, кулаксен експлоататăрла майкăрла хăнăхăвĕсене те, пур тĕрлĕ нушана, апла пулсан, йалти кĕлмĕçлĕхе те ĕмĕрлĕхе пĕтерсе хурас тесе тунă.

Çĕре уйрăм харпăрлăх йĕркипе тытса тăрассине пĕтерсе, Совет влаçĕ йалти експлоататăрсен вăйне тăруках аркатса йачĕ. Анчах кулаксем—ростовщиксем чухăн хресченсене тĕрлĕ майсемпе експлоатацилеме çав-çавах пултарнă-ха. Вăйсăр хуçалăхсен кулаксенчен ирĕксĕррех ĕçхатĕрсем, вăрлăх, лаша, укçа кĕтевле илмелле пулнă. Кулаксем вара хресченсене парăма ĕçлесе татма хушнă; укçа, вăрлăх, ĕçхатĕрĕ кĕтевле панăшăн пысăк процентсем илнĕ. Апла пулсан, кулаксем çĕре уйрăм харпăрлăх йĕркипе тытса тăрассине пĕтерсе хурсан та, чухăнсене пăхăнтарса, експлоатацилесе пурăнма пултарнă-ха.

Кулаксем експлоататăрла классенчен чи йышлăрах клас пулнă. Пур тĕрлĕ експлоатацийе те пĕтерес тесен, йалти пĕтĕм йĕркесене çĕнĕле тумала пулнă. Коммунисем хресченсене йалти нушана тата кулаксен мăшкăллă пусмăрне обшчествăлă шултăра хуçалăх никĕсĕ çинче кăна пĕтерме май пурри çинчен ăнлантарнă. ССР Сойузĕн промышленнăçĕ малта пыракан вăйлă индустри пулса кайнă. Йалхуçалăхне промышленнăçран кайа хăварса пыма йураман: шултăра, аталаннă социалисăмлă индустрипе йунашарах йала вакран та вак хуçалăхсен тинĕсĕ пек хăварма йураман.

Коммунисем хресченсене вĕсен çăлăнăçĕ пĕччен хуçалăхпа пурăнас ĕмĕрхи йалисене пăрахăça кăларнинче пулат тесе ăнлантарса пынă. Совет влаçĕ хресченсене пур хатĕрсемпе те—кивçен укçа парса та, вăрлăхсемпе те, йалхуçалăх орудийĕсемпе те пулăшнă, кулаксене йалта ирĕк паман, вĕсен експлоататăрла туртăмсене пӳлсе пынă. Анчах çакăнпа пĕрлех коммунисен партийĕпе Совет влаçĕ хресченсемшĕн нушаран тата експлоатациран пĕтĕмпех хăтăлмали пĕртен-пĕр çул вăл колхозсем тунинче пулнине хресченсене кăтартсах тăнă.

Колхоз çулĕ—вăл йалта социалисăм çулĕ пулат те ĕнтĕ. Ку çула ĕçхресченĕсене ЛЕНИНПА СТАЛИН кăтартса пачĕç. Социалисăма шултăра производствă никĕсĕ çинче кăна тума пулат. Йединоличникла хресченсен вак хуçалăхĕсем йе чухăнланса кайа йулса пыраççĕ, йе аталанса ӳссе пырса капиталисăма, буржуазийе, тара тытас ĕçе, експлоатацийе çуратаççĕ. Социалисăм никĕсĕ шултăра хуçалăх кăна пулма пултарат. Анчах та, паллах, шултăра уйрăм хуçалăх мар. Кулак хуçалăхĕ те шултра хуçалăх, анчах вăл капиталисăмлă, експлоататăрлă хуçалăх. Експлоатацисĕр, çаратусăр, производствă ĕçхатĕрĕсемпе орудисене тытса тăрас тĕллĕшпе уйрăм харпăрхăрлăхсăр шултăра обшчествăлă производствă кăна социалисăм никĕсĕ пулса тăрат. Акă мĕншĕн большевиксем рабочисемпе хресченсен социалисăм çĕнтерĕвĕшĕн пынă кĕрешӳне йертсе пырса, хресченсене коллективизаци çулĕ çине, шултăра, коллективлă йулташлăх çулĕ çине тимлĕнех илсе пынă.

Çĕршыва индустриализацилес ленинла-сталинла политикă çĕнтерни йала социалисăмлă çĕнетсе урăхлатас ĕçе хăвартлатрĕ. Кивĕ йалта нумайран нумай пĕчĕкçĕ хуçалăхсем пулнă. Вĕсенчен кашнийех тата вакрах хуçалăха пайланнă: çемйесенчен çитĕннĕ ывăлĕсем, хĕрĕсем уйăрăла-уйăрăла тухнă; çакăнпа пĕрлех хресчен çемйи кильçуртне, пӳртне, çĕрĕсене, ĕçхатĕрĕсене уйăрнă. Хуçалăх вакланса кайнă. Кашни хуçалăх хăйĕн пĕчĕк татăк çĕрне мĕнпе пултарнă çавăнпа ĕçленĕ; сухапуçпе, кĕреçепе, мотыгăпа чавнă. Йалхуçалăх техники начар та авалхискер пулнă: нумай хресчен хуçалăхĕсен трактор мар, тимĕр плуг туйанма та вăй çитмен. Революцичченхи хресчен хуçалăхĕнче тĕп ĕçхатĕрĕсем сухапуçĕсем, туратран тунă сухапуçсем, йăвăр плугсемпе сӳресем пулнă.

1913 çулта Америкăри пĕр фирмă Российăна пуçласа пĕр трактор илсе килнĕ. Ку вăл, çĕршывра пĕртен-пĕр трактор пулнă. Ăна Кийевра йалхуçалăх выставкине кăларса тăратнă пулнă, анчах ӳй-хирте унпа усă курман.

Совет влаçĕ индустриализаци политикине пурнăçа кĕртсе, пырса пĕррĕмĕш пйатилеткăра Сталинградра вăйлă трактор завочĕ, ун хыççăн Харьковра тата Челйабинскра тепĕр икĕ вăйлă трактор завочĕсем турĕ. Çавăн пекех вăл Саратовра, Запорожйĕрĕ комбайн завочĕсем, Ростовра йалхуçалăх машинисем тăвакан заводра комбайнсен цехĕ турĕ. Çакăнпа пĕрлех Совет влаçĕ тата ытти йалхуçалăх машинисемпе орудийĕсем тăвакан заводсене те çĕнетсе урăхлатрĕ. Йалхуçалăхне ӳстерсе йарса техникăн йулашки çитĕнĕвĕсемпе вăйлатма тăрăшса Совет влаçĕ йала вуншар пин трактор, комбайн, молотилкă тата ытти пысăк машинисем йачĕ. Машинăлă-трактор станцисем турĕ. Вĕсем те пур çĕрте те колхоз йухăмне аталанма пулăшрĕç. Совет влаçĕ темиçе пин шултăра совхозсем турĕ.

Çаксем пурте хресченсене шултăра производствă йалта тăнине кăтартса пачĕç. Хресченсем колхозсем уйрăм [illegible]

*) „Наша родина" кĕнекерен. Пуçламăшĕ „Чăваш Коммунин" 255, 259, 260-мĕш номĕрĕсенче.

Пирĕн влаç—пĕтĕм халăх влаçĕ

Патша вăхăтĕнчи тискер саманара пирĕн пек вак халăхсене пыçĕпăнах таптаса лартма пăхнă. Епĕ хам мордва халăхĕнчен. Епĕ ĕлĕк Чĕмпĕр кĕпĕрнине кĕнĕ Улатăр уйесĕнчи Напоçноĕе йалĕнче çуралса ÿснĕ. Çемйере пирĕн 8 çын пулнă, çак 8 йатакпа епĕр 2 йат çĕрĕ акса пурăннă. Чи лайăх пулнă çулсенче мĕн пур тырă пирĕн 50—60 пăт пухăннă. Çакăнпа лаша, ĕне усрама пăхнă, хамăр пурăнма тапаланнă. Выçăла-тутăла çур хĕле çиткеленĕ—малала çĕрме пуйансем патне кивçене кайнă. Атте хĕллехи вăхăтсенче йалсем тăрăх çĕвĕ çĕлесе çÿренĕ, çакăр татăкĕ хыççăн таçта та пырса ситнĕ, анчах хырăмне тăрантараиман.

Епĕ çемйере аслă ывăл пулнă та, 18 çул тултаричченех килте ĕçленĕ. Пире чухăнсене хут вĕренме май пулман. Епĕ шкула висĕ çул çÿрекелерĕм, çапах та нимĕн те ăнланса илеймерĕм. Ун чухнехи шкулсен программи пупсен программи пулнă, пире линейкăпа шаккаса тĕрлĕрен „турă саккунĕсене" вĕрентнĕ.

Вунсакăр çула çитсен, епĕ Пăрачкаври Майоров купец патне кайса, армана ĕçлеме кĕрĕшрĕм. Тимĕр пăрса-хыткукар талăкра 15—16 сехет ĕçленĕшĕн, уйăхне малтан 6 тенкĕ тÿлетчĕ, кайран вара ÿстерсе 10 тенке çитерчĕ. Кунта 10 ç. хушши ĕçлерĕм. Унтан киле тавăрăнса пĕр çул пурăнтăм та, мана империалисăм вăрçине илсе кайрĕç. Вăрçăран 1915 çул вĕçĕнче ĕмĕрлĕхех урапа амантса тавăрăнтăм.

Пăхрăм хуçалăх çине—кил-çурт йапăх, лаша тăвата урипе пĕр çĕрте тăрать, ĕне пĕр выртсан тăраймасăр хăшкăлать. Хамăн та ура айăллă.

Пурăнкаларăм, тÿрленсен пекки пултăм та, таврана ĕçлеме тухса кайрăм. 1925 çулта Çĕпĕре те çитмеле пулчĕ—унта Уçат станцинче платник пулса, 1927 çулччĕнех ĕçлерĕм. Çĕпĕртен—Йудино станцийĕ. Унтан пире, чукунçул çинче ĕçлекен строителсене, 1929 çулта Канаша куçарчĕç. Кунта транспорт строителствинче ĕçленĕ.

1934 çулхи февралĕн 19-мĕшĕнче епĕр вагонсем йусакан заводăн строителствине пуçарса йама килтĕмĕр. Халĕхи заводпа çĕнĕ Канаш хули вырăнĕнче 1934 çулччен ерĕм ути анчах кĕрхи çилпе шăхăрса ларатчĕ. 3—4 çул хушшинче тем пысăкĕш хула ÿссе ситĕнчĕ. Мухтансан та намăс мар—епĕр, строителсем, пĕтĕм хулана, мĕн пур пурăнмали çуртсене, завод корпусĕсене хамăр алăпа туса лартнă. Халĕ теплоелектроцентраль тунă çĕрте ĕçлетпĕр, çакă çĕнĕ хулан хăватлă чĕрине хăвăртрах ĕлкĕртме васкатпăр.

Халь епĕ 55 çулта. Стахановец. Хам ĕçшĕн еп тăвата хутчен премии илнĕ. Завод строителствинче епĕ нумай пĕлÿ туйантăм. 1936 çулта государствăн техникăлă експамĕнне мĕн пур йенчен „отлично" паллăсемпе тытрăм, аттестат илтĕм. Иртнĕ хĕлле 4 уйăхлăх курсра пултăм, унта та отличнă вĕренсе тухрăм.

1937 çул маншăн питех те чаплă çул пулса тăчĕ, епĕ çак иртсе пыракан çулхи март уйăхĕнче парти кандидатне кĕтĕм. Коммунисчен аслă партийĕ мана çак çĕр çинчи чи аслă, чи таса ăслăлăха—Маркспа Ленин вĕрентĕвне ăса илме пулăшать. Епĕ политграмота шкулĕнче вĕренетĕп.

Ман ывăлсем совет аслă шкулĕсенче вĕренсе тухрĕç. Асли—Василий Феодорович, иккĕмĕш çул ĕнтĕ, Мордовинче участкăри врач пулса ĕçлет; иккĕмĕшĕ — Павел—Удмуртинче, парти райкомĕн инструктăрĕ; виççĕмĕшĕ — Сергей—инженер, вăл çак çулта Тулари машиностроени институтне вĕренсе пĕтерчĕ, халĕ Хусанта ĕçлет; кĕçĕнни—Иван кунта 7-мĕш класра вĕренет.

Çĕнĕ Конституцине епĕр мĕн пуррине, мĕн çĕнтерсе илнине сырпă. Унта пĕр суйа сăмах та çук. Пирĕн Конституци тĕрĕссине ман çемйе те акă, лайăх кăтартса парать. Мордови, Удмурти, Тутарпа Чăваш республикĕсен çĕрĕсем çине ман йăх сарăлнă. Пĕтĕм çĕршыври халăхсем епĕр пĕр тăван. Пире аслă Сталин ăшшăн пăхса усрать.

Çамрăк йăх телейлĕ, вĕсем коммунисăма хуçа пулса кĕреççĕ. Епĕр те, ватăраххисем, телейсĕр мар, епĕр строителсем, хамăр алăпа 20 çул хушшинче социалисăм çуртне туса çитертĕмĕр. Пушă çĕçен хирсенче хуласем ÿссе ларчĕç, йал сăпĕ паллама çук çĕнелчĕ. Нумай пулмасть епĕ Патăрйелпе, Йелчĕк районĕсене командировка—рабочисем пухма кайса килтĕм. Ĕлĕк те пулкаланă епĕ ку таврара. Ĕлĕк Патăрйел, Йелчĕк таврашĕнчи чăвашсем ытла та тĕттĕмре, ытла та йăварлăхра пурăннă. Халĕ кашни йалта колхоз çурчĕсем хула пек ÿссе ларнă. Кашни йалта шкул, клуб, вулав çурчĕ, трахомпункт. Сывăхрах больницăсем.

Епĕ пирĕн тăван çĕршыв йумахри пек ÿснипе кашни утăмрах хам куçпа куратăп, хамăн чĕрепе туйатăп.

Аслă Октябĕр çути çĕнĕ Конституци çине пĕтĕмĕшпех ÿкнĕ. Пирĕн Конституцине социалисăм принципĕсемпе тунă. Пурнăçăн тĕп тĕрекĕсене епĕр çĕнтерсе илнĕ. Конституцине мĕн тунине, мĕн çĕнтерсе илнине сырнă. Сталинла Конституци тăрăх епĕр халăх влаçне тытса пыратпăр. Пирĕн влаç—пĕтĕм халăх влаçĕ. Епĕр Аслă Совета пĕтĕм халăх шаннă сынсене суйлатпăр. Аслă строител Сталин йулташ пирĕн пĕрремĕш депутат пулать.

Маколкин, Федор Андрейевич.
Вагонсем йусакан завод строителствинчи строител-стахановец,

Гектартан 3660 пăт вылăх кăшманĕ

ВАРНАР (хамăр корр.). Районра нойабĕрĕн 10—11-мĕш кунĕсенче йалхуçалăх выставки пулса иртрĕ.

Выставкăра колхозсенче халиччен пулман тырпул, пахча-çимĕçсем туса илнине тата вылăх-чĕрлĕх, хурт-хăмăр ĕрчетес тĕлĕшпе ÿсĕмсем тунине татăклă кăтартса пачĕç.

Мăн Йавăшри Ленин йачĕпе тăракан колхоз, хайĕн рекордлă участки çинче кашни гектартан 210-шер пăт ыраш туса илнĕ. Анаткассри Чапайев йачĕпе тăракан колхоз кашни гектартан вăтам шутпа 205-шер пăт урпа илнĕ. Хăмашри колхоз вăтамран 196 пăт сĕлĕ илнĕ.

„Броневик" колхоз çĕрулмисем лартас умĕн 2 гектар рекордла участкă уйăрнă. Участкă çинче кăтартуллă ĕçлеме чи лайăх колхознике—Чернов йулташа çирĕплетнĕ. Чернов йулташ пур агротехникă вĕрентÿсене, хушувĕсене пурнăçласа пырса, кашни гектартан 1585 пăт çĕрулми туса илнĕ. Çавăн пекех Кÿлхĕрĕнчи „Трактор" колхоз та хайĕн рекордлă участкинчен 3660 пăт вылăх кăшманĕ туса илнĕ.

Выставкăра Колцовкăри Сталин, Зеленовкари Ленин йачĕпе тăракан колхозсем чи паллă вырăн йышăнчĕç. Весем вăтамран кашни гектартан 100-шер пăт, уйрăм участкăсем çинчен 200 пăт ытла тырпул туса илсе, кашни ĕçкунĕ пуçне 13—14 килограм валеççе параççĕ.

Ейзенбраун.

Комбинат ÿстернĕ хĕр

Йавăр пулнă Маруççă Черновăн ача чухнехи пурнăçĕ. Выçлăх çул, 11 çула çитсен Маруççă ашшĕсĕр-амăшсĕр тăрса йулнă. Çемйере 16 çулхи пиччĕшсĕр пуçне тăрантарса усрама пултаракан никам та пулман. Çавăнпа Маруççă çамрăклах çынсем патĕнче, ирĕкре ĕçлеме тытăннă. Нумай çĕрте ĕçленĕ вăл.

1929 çулта Куславккара комбинат тума тытăнсавах строителствăна ĕçлеме килсе кĕнĕ. Вăл комбинат фундаментне хывнă чухне кирпĕчсем йатнă çĕрте ĕçленĕ. Комбината туса пĕтерсе хута йарсан висĕ уйăхлăх курсра вĕренсе тухса станок çинче ĕçлеме тытăнна. Çaвăнтан унăн пурнăçĕ çĕнĕ çулпа малала кайма тытăнать. Вăл тимлесе, вĕренсе пырса, тăрăшса ĕçлесе ударниксен ретне, унтан стахановла йухăм пуçлансан стахановецсен ретне тăрать.

Хале Маруççă Чернова производствăри стахановкă. Октябĕр уйăхĕнчи нормăна 200 процент тултарнă.—Малашне тата та лайăхрах ĕçле еп, тет Чернова йулташ. Вăл М. Широковăпа ăмăрса ĕçлет. Вĕсем иккĕше те ССР Союзĕн Аслă Советне суйлавă куна нормăна йаланах 200 процентран кайа мар тултарса ĕçленипе кĕтсе илессишĕн тăрăшаççĕ.

Маруççă халĕхи савăнăçлă пурнăçпа савăнать. Унăн умĕнче ĕçлеме те, вĕренме те, канма та çул уçă. Лайăх ĕçлет. Таса çуртра пурăнать, тирпейле тăхăнса çÿрет.

Маруççăн тăванĕсем те лайăх пурнăçпа пурăнаççĕ. Шăлнĕ Инçет-Хĕвелтухăçĕнче Хĕрлĕ çарта хамаран тăван çĕршыв чиккине сыхлать. Ыттисем колхозра пурăнаççĕ.

В. Давыдов.

Колхозри çĕнĕ производствă

ВĂРМАР. Аслă-Чак йалĕнче кирпĕч тăвас промысла пуçланнăранпа 50 çула йахăн иртрĕ. Анчах ку ĕç революцичченех саралма пултарайман. 1889 çулта йалĕпе те 300 штук кирпĕч çеç тунă.

Революци пулнă хыççăн аласта ĕçĕ вăйлăн ÿсме тытăнчĕ. Йалта колхоз организацилесен кирпеч тăвакан производствă уçнă. Вăл производствă кăçал 450 пин штук кирпĕч каларнă. Унсăр пуçне черепица тăвакан производствă организациленĕ. Кăçал 28 пин штук черепица каларнă.

Производствăсем плана ăнăçлăн тултарса пыраççĕ. Октябĕр уйавĕ тĕлне çулталăкри плана кирпĕч тăвассипе 105 процент; черепица тăвассипе 109 процент тултарнă.

В. Андрианов.

Куславкка комбинатĕнчи стахановец М. Н. Новиков йулташ.
Цыганов фото-ÿкерчĕкĕ.

27 агитатăр

ПСК(б)Парти Вăрнар райкомĕ агитатăрсен 5 кунлăх курсне туса иртерчĕ. Вĕсем Сталинла Конституципе суйлав саккунне тĕплĕн вĕренчĕç, Пĕтĕмпе 27 агитатăр вĕренсе тухрĕç, вĕсенчен çурри ытла комсомолецсем. Н. Козлов.

Оборонă ĕçне вĕренеççĕ

ТРАК. Çĕнйал Шетмĕри аластаăх ертелĕ çумĕнчи „Спартак" спорт обшчествин членĕсем оборонă ĕçне вĕренеççĕ. Халĕ 21 çын ГТО нормисене пĕтĕмпех пачĕç. 17 çын значокĕсене те илнĕ. Халхи вăхăтра Ворошилов пек тĕл пеме, ПВХО тата ГСО значокĕсен нормисене пама тытăнчĕç. Ив. Сергейев.

Канаш—Шупашкар чукунçул строителствинчи стахановец Д. Ф. Трубин, вăл нормăна 150 процент тултарса ĕçлет.
Цыганов фото-ÿкерчĕкĕ.

Хресчен çурчĕ

Çĕрпÿре Курбатов помешчикпе Лазарев кулак нумай çĕр тытса пурăннă. Вĕсен вырăнĕсене халăх ура йарса пусма та хăранă.

Хулана килекен çынсем уйрăм çынсем патне хватере кĕнĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ уйрăм хуçасем, халăха çаратма вĕреннĕскерсем, хватере кĕрсе выртакансене час-часах çaратма та пиленнĕ.

Хуçасен ĕмĕрĕ иртсе кайрĕ. Халĕ Çĕрпÿ нумай çĕнелнĕ, культурăланнă. Курбатов помешчикĕн çĕрсе, ванса пĕтнĕ витисем ларнă вырăнта халĕ çĕнĕрен хресчен çурчĕ туса лартнă. Çуртра пурĕ 25 вырăн, заведуйушчи валли, кĕрсе выртакансене валли перлешÿлĕ кухня, кассă пур. Пÿлĕмсенче Ленин, Сталин, Молотов, Ворошилов тата партипе правителствăн ытти руководителĕсен портречĕсем, плакатсем çакăнса тăраççĕ. Вырăнсем çемçе, икшер минтерлĕ, електричества çути те пур.

Халĕ çак çуртра суйлав комисçийĕ ĕçлет. Ник. Нехвет.

Шăхран посолкинчен—Канаш хули

„Епĕр астăвасса çак Шăхран посолкинче чукунçул станцийĕпе 4—5 çуртсăр пуçне нимĕн те çукчĕ вĕт. Халь акă, хула пулса тăчĕ", тенине илтетпĕр епĕр халь 35—40 çулала çитнĕ çынсенчен. Ку пĕтĕмпех тĕрĕс. Октябĕрти Социалисăмла Аслă революцичченхи Шăхран поçолки çинчен урăх мĕн каламалли пур тата.

Патша правителстви ĕçхалăхне чуралăхра тата тĕн сĕрĕмĕнче тытса пурăннă. Çавăнпа та, Шăхран посолкинче те, чи малтанах халăха улталама чиркÿ лартнă. Посолкăра мĕн пурĕ пĕр шкул—учителсен семинарийĕ пулнă. Анчах, вăл шкулта пупсемпе кулак ачисем кăна вĕренме пултарнă. Чухăнсемшĕн вăл шкулăн алăкĕ уçалман. Кусемсĕр пуçне, поçолкăра висĕ арман пулнă. Вăл армансене Кашинский, Абалымов тата Мочалов хуçасем тытса тăнă. Вăл хуçасем Шăхран таврашĕнчи хресченсен пурлă-çуклă тыррисене çаратса пуйса пурăннă.

Октябĕрти Социалисăмла Аслă революци пулни 20 çул тултарчĕ. Ленин — Сталин партийĕ йертсе пынипе, пирĕн çĕршыв паллама мар улшăнчĕ. Российăн мешченсен хулисем вырăнне çĕнĕ социалисăмла культурăлă хуласем пулса тăнипе пĕрлех, çĕршывра çĕршер хуласем çĕнĕрен ÿссе çитĕнчĕç. Çак, çĕнĕ социалисăмла хуласенчен пĕрийĕ вăл—Канаш хули. Çак 20 çул хушшинче Шăхран посолки хайĕн йатне те, сăнсăпатне те паллăмала мар тĕпренех улшăнтарчĕ. Халĕ вăл Шăхран посолки мар, Канаш хули, — промышленнăçлă, социалисăмла çĕнĕ хула.

Канаш хули хăвăрт ÿсет. Вагонсем йусакан завод—хайĕх пĕр хула. Ку завод кĕске вăхăтрах тĕлĕнмеле хăвăртлăхпа ÿссе çитĕнсе, Канаш хулине çĕнĕ сăн-сăпат кĕртрĕ. Завод вырăнĕнче 3—4 çул кайала çеç çап-çара уй выртнă. Халь кунта завод, ик-висĕ хутлă çуртсем инçетренех курăнса лараççĕ. Кунтах клуб, театр, библиотекă, шкул т. ыт. те. Вĕсене пурне те заводра ĕçлекен рабочисем валли тунă.

Хулара промышленнăç ÿссех пырать. Вагонсем йусакан заводсăр пуçне, мебелсем тăвакан тата премексем пĕçерекен фабрикăсем, машинăпа трактор станцийĕ, машинăпа трактор йусакан мастерской т. ыт. промышленнăçла предприйатисем темиçе мĕлйун тенкĕлĕх продукци туса кăлараççĕ. Ĕлĕкхи кустарлă армансем халь електричествă вăйĕпе ĕçлеççĕ.

Хулан коммунальнăй хуçалăхĕ те чылай ÿсрĕ. Çуртсене 1929 çултанпах Илйич лампăчки çутатать. Канашри електростанци хăй вăйĕпе коммунальнăй предприйатисене ĕçлеттерет, Шăхасан йалне çутă парать. Хулара халь çĕнĕ стройкă хĕрсех пырать, рабочисемпе служăщисем валли çĕнĕрен те çĕнĕ çуртсем хутшăнаççĕ. Кăçал педучилищă çурчĕ тата унта вĕренекенсем валли 200 çын вырнаçмалăх обшчежити, финтехникум çурчĕ тата обшчежити туса пĕтереççĕ.

Канашри клиника районра çеç мар, пĕтĕм Чăваш республикĕнче паллă вырăн йышăнса тăрать. Унта темиçе врач тата вуншар фелдшерсем ĕçлеççĕ. Ку клиникăна Чăваш республикĕн пур кĕтессисенчен те сывалма çÿреççĕ.

Еç хыççăн хула халăхĕ хăвасла канать: радио итлет, кино, театр курать. 500 çын вырнаçакан соцкультурă çурчĕ каçсерĕнех халăхпа тулать. Çаксем çинчен ĕлĕкхи вăхăтра шухăшламалли те пулман.

Ĕлĕкхи вăхăтра утса тухайми лачакалă урамсем халь чулпа та шашкăпа витĕнеççĕ. Халхи вăхăтра хула урамĕсене 21.440 тăваткал метр йе 3.168 метр тăршшĕ чул тата шашкă сарса тухнă. Чылай урамсенче йавăссем йешĕрсе, хулана илемлетеççĕ.

Ĕçсыннисен ачисем пурте шкулсенче вĕренеççĕ. Кунта икĕ туллимар вăтам шкул, икĕ вăтам шкул. Вăл шкулсенче 2275 çын вĕренеççĕ. Кусемсĕр пуçне, хулара педучилищă, финтехникум, медицинăпа ĕçлекенсен шкулĕ, районри колхоз шкулĕ т. ыт. шкулсем те пур.

Çакăн пек Социалисăмла Аслă революци тивлечĕпе ÿссе чечекленекен Канаш хулин çĕнĕ сăн-сăпачĕ.

Хула ÿсет, татах ÿсĕ вăл. Сталинла Конституципе çĕнĕ суйлав саккунĕ хула ĕçсыннисен производствăлă тата политикăлă хастарлăхне сÿлĕ çĕклерĕ. Вĕсем партипе правителствă лартнă задачăсене пурнăçлассишĕн хастарлăн кĕрешеççĕ. Совет Союзĕнчи мĕн пур халăхпа пĕрле ССР Союзĕн Аслă Советне суйлама тимлĕн хатĕрленеççĕ.

Ив. Малов.

Пĕр ертелри аластаççем

КАНАШ. Сухайкассинчи аласта ертел членĕсем хушшинче ĕçе çĕнĕле йĕркелес йала кунран кун çирĕпленсе пырать. Кунта кашни аластаç хайĕн ĕçне стахановла организацилессишĕн тăрăшать. В. Семенов йулташ техникăпа туллин усă курма йаланах çĕнĕ майсем шырать. Вăл рационализаципе изобретени ĕçне лайăх йĕркелерĕ. Кашни çĕнĕ меслетпе усă курать. Плана йаланах тултарса пырать.

Катка-пичке тăвакан Крылов йулташ брака пĕтĕмпех пĕтерчĕ. Нормăна 150 процент тултарать. Родионов йулташ нормăна 200 процент тултарса пырса кашни уйăхра 4000 тенкĕлĕх таварсем туса кăларать. Кусем пек лайăх тĕслĕхсем паракан аластаççем нумай кунта.

Аластаççем тăрăшса ĕçленипе ертел хайĕн планне ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырать. Октябĕр уйавне плана 192 процент тултарнипе кĕтсе илчĕ. Уйав кунĕнче ертел членĕсем хайсен иртнĕ тапхăрти ĕçĕсене тишкерсе тухса малашнехи ĕçсем çинчен сÿтсе-йаврĕç. Вĕсем тата та лайăх ĕçлеме пулаççĕ.

В. Чернов

лĕ вак хуçалăхран ытларах усă панине ăнланса çитрĕç. Хресченсем вăйлă машинăлă техникăран шултăра хуçалăхра кăна пысăк усă илме пулнине ăнланса çитрĕç. Хресченĕн йаланхи ĕçхатĕрне пĕр çĕре пухса ертелпе пĕрле усă курни те пĕччеишерĕн ĕçленинчен нумай пысăкрах результат панине ăнланса илчĕç вĕсем.

Колхозсем, совхозсем пекех, ытти шултăра хуçалăх пекех, ĕçхатĕрсемпе, çĕре çемçетмели имçамсемпе, агрономилĕ çĕнĕлетÿсемпе тата лайăхлатусемпе аванрах усă курма май панă. Колхозсем колхознике, тăрукăх, уйрăм хуçалăх йединоличнике тупăш панинчен ытларах тупăш пама пуçланă. Çавăнпа та 1929 çултан пуçласа хресченсем колхоза йышлăн кĕме тытăнчĕç.

Колхоз йухăмĕ хайĕн çулĕ çинче сахал мар йăвăрлăхсем тĕл пулчĕ. Кулаксем çак йухăма хирĕç питĕ вăйлăн тăчĕç. Колхозсем çĕнтерсен, кулаксен кунçулĕ пĕтнине йалти експлоататăрсем — кулаксем—уççăнах курса тăнă. Большевиксен партийĕпе совет влаçĕ коллективизаци никĕсĕ çинче кулаксен класне пĕтĕмпе пĕтерессишĕн кĕрешрĕç. Кулаксем колхозсем тăвас ĕçе питĕ хытă хирĕç тăчĕç, вĕсене арkатма тăрăшрĕç, машинăсене çĕмĕрчĕç, ĕç вылăхĕсене ĕмел парса вĕлерчĕç, колхозсен хуралтисене вут тĕртсе çунтара-çунтара йачĕç, колхозсен тыр-пулне вут тĕртсе çунтарчĕç, малта пыракан колхозниксене вĕлерчĕç.

Троцкиссен йулашкисемпе йутçĕршыв разведкисен агенчĕсем те кулаксемпе пĕрле ĕçлерĕç. Вĕсем производствă хатĕрсемпе орудийĕсене кăна мар, колхозникĕн пĕтĕм хуçалăхне: пурăнмали çуртне, ĕнине, чăх-чĕпне тата хайĕн пахчине пĕрлештере пуçларĕç; вĕсем колхозниксене пасма çĕр участкисемсĕр тăратса хăварма тытăнчĕç. Сăтăрçăсем хресчен вылăхĕсене тĕрлĕрен чирсем (чума, анемийă, тата ытти çавăн пекки) йертсе чирлеттерчĕç.

Кулаксемпе, троцкиссемпе тата шпионсемпе пĕрле колхозсене хирĕç парти ĕçне сутнă сылтăмрисен Бухарин, Рыков, Томский йертсе пынă ушкăнĕ те кĕрешрĕ.

Большевиксен партийĕпе совет влаçĕ çав предателсене тата халăх тăшманĕсене çапса салатрĕç. Кулаксем колхоз строителствине хирĕç тăнине çапса çĕмĕртĕмĕр. Кулаксен класне пĕтерсе хутăмăр. Йалта колхоз йĕрки çĕнтерсе çирĕпленчĕ. Совет йалĕ телейлĕ, пурлăхлă колхоз пурнăçĕ патнелле хавассăн та шанăçлăн кайрĕ.

Колхоз йĕрки çĕнтерни

Йалта колхоз йĕрки çĕнтерни тырпул ыйтăвне, Совет çĕршывне продовольстви тăратас ыйтăва татса пачĕ.

Колхозсем çĕнтеричченех хуласемпе Хĕрлĕ çар валли тыр-пулă, аш-какай, сĕт-çу тата ытти хатĕрлевсене кулаксем пур майсемпе те арkатма тăрăшрĕç. Революцичченех кăна мар, Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенче те кулаксем хайсен аллинче тыр-пулă нумай тытса тăнă.

Революцичченех, помешчиксемпе кулаксем, пĕрле илсен, халăхăн 13 процентĕнчен кăшт кăна ытларах пулнă. Анчах вĕсем сутлăх тыр-пулăн, таварлă тыр-пулăн, 72 процент тытса тăнă. 1926—27 çулта, помешчиксем, паллах, пулман ĕнтĕ, анчах кулак хуçалăхĕсем йалти пĕтĕм хуçалăхсен 4,5 процентĕ чухлĕ пулнă. Кулаксем хайсен аллинче вара пĕтĕм таварлă тыр-пулăн 20 процентне тытса тăнă.

Халĕ йалта кулаксем çук ĕнтĕ. Пĕтĕм таварлă тыр-пулăн 97 процентĕ колхозсемпе совхозсен пулса тăрать. Йалти социалисăмла хуçалăхсен клечĕсенче тулă, ыраш тата ытти продуктăсем туллийех. Тыр-пулă йалта-кăна мар çителĕклĕ, ăна колхозсемпе совхозсен уйхирĕсенчен хуласенчи ĕççыннисемпе Хĕрлĕ çар валли те çителĕклех илсе пырса тăраççĕ.

Халĕ пĕтĕм акмалли çĕр талкăшне колхозсемпе совхозсем ĕçлесе тăраççĕ: 1928 çулта ССР Союзĕнчи пĕтĕм çĕр талкăшĕнчен колхозсемпе совхозсем 2,3 процентне кăна ĕçлесе тăнă, 1937 çулта вара,—99 процент ĕçленĕ. ССР Союзĕн йалхуçалăхĕ, ĕлĕк вакран та вак хуçалăхсен океанĕ пулнăскер, халĕ ĕнтĕ тĕнчипе чи шултăра социалисăмлă йалхуçалăхĕ пулса тăчĕ.

ССР Союзĕнче, вăтамран илсен, пĕр совхоза 2703 гектар, колхоза—473 гектар çĕр тивет. Америкăра пĕр хуçалăха, вăтамран илсен, 20—21 гектар, Германире унтан та сахалтарах—мĕн пурĕ те 6,5 гектар анчах тивет.

ССР Союзĕнче совхозсемпе колхозсен уй-хирĕсенче çĕршер пин машинă ĕçлет. 1932 çулта, пĕрремĕш пйатилеткă пĕтнĕ çĕре, пирĕн машинăлă трактор станцийĕсенче 70 пине йахăн трактор пулнă. Çак вăл йалхуçалăхне машинлас ĕçре питĕ пысăк утăм пулнă. 1937 çулăн варринче машинăлă-тракторлă станцăсенчи тракторсен хисепĕ 365 пинрен те иртсе кайрĕ. ССР Союзĕн тракторпа ĕçлемели ĕçсен пысăкăшĕ 1936-çултах Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенчинчен икĕ хут пысăкрах пулнă.

Пирĕн тăван çĕршывра социалисăмлă уй-хирсенче тракторсемпе комбайнсем кирек мĕнле буржуалă патшалăхринчен те пысăкрах тухăçлă ĕçлеме пултараççĕ. Çĕрсене уйрăм хуçасем тытса тăракан капиталисăмлă çĕршывсенче тракторсем йе комбайнсем кÿршĕ çĕрĕ çине пырса тирĕнеççĕ. Унта трактор кирлĕ таран ĕçлеме пултараймасть. Анчах ССР Союзĕнче вара, çĕрсене уйрăм харпăрлăх туса тытса тăракансем çук çĕрте, тракторсемпе комбайнсен хуçи государствă пулса тăнă çĕрте, машинăсене ĕçлеме çĕр ирĕк. Пур колхозсем те машинăлă-трактор станцийĕ хайсене пырса пулăшасса хапăл тусах кĕтеççĕ. 1937 ç. пирĕн çĕршыври пур колхозсен ĕçĕсене те тенĕ пекех машинăлă-тракторлă станцисем ĕçлесе пачĕç.

ССР Союзĕнче тракторсем Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенниичен сахалтарах. Анчах ĕçлесе пирĕн трактор паркĕ Пĕрлешÿлĕ Штатсен трактор паркĕнчен нумай ытларах ĕçлет. Социалисăмлă системă хуçалăхĕ, капиталисăмлă хуçалăхпа танлаштарсан, нумай малта тăни çакăнтан курăнать те ĕнтĕ.

Совет уй-хирĕсенче пур çĕрте те колхозсемпе совхозсен чи лайăх çыннисем тулă, çĕрмамăкĕ, сахăр кăшманĕ, йĕтĕн тухăçĕшĕн кĕрешеççĕ. Хăшпĕр учонăйсем пирĕн çĕршывра сахăр кăшманĕ гектартан 200—250 центнертан ытла илме çук терĕç. Анчах Украинăри колхозницăсем гектартан пин центнертан ытла сахăр кăшманĕ илме май пуррине кăтартса пачĕç. Хăшпĕр учонăйсем тата çавăн пекех пирĕн çĕршывра çĕрмамăкĕ гектартан 13—15 центнертан ытла илме çук терĕç. Анчах Узбекистанри çĕрмамăкĕ ĕçленĕ çĕрте малта пыракансем учонăйсем палăртнинчен 4—5 хут ирттерсе йачĕç.

Пирĕн çĕршыв совет çĕрĕнчи нихăçан пĕтми пысăк пуйанлăхсене кăларассишĕн кĕрешет. Совет йалхуçалăхĕ хайĕн уй-хирĕсенчен питĕ те нумай тыră-пулă пухса кĕме пултарать. 1937 çулта Совет çĕршывĕ питĕ пысăк тухăçлăх илчĕ. Пирĕн колхозлă йал хайĕн çĕрĕсене совет машинисемпе сухалаканскер, çĕре совет имçамĕсемпе çемçетекенскер, хăйĕн уй-хирĕсенчен тата нумайтарах тырпулă, сахăр кăшманĕ, кантăр, хĕвелçавăрнăшĕ, çĕрмамăкĕ, йĕтĕн, пахча-çимĕçĕ пухса кĕре пуçлĕ.

Революцичченех Российă вăтамран 5 мĕлйарда йахăн пăт тыră пухса тăнă. Хресченсем выçăллă-тутăллă пурăннă, питĕ нумай выçăпа вилсе пĕтнĕ. Халĕ ĕнтĕ колхозниксемпе совхоз рабочийĕсем çулсерен 7—8 мĕлйард пăт тыră пухассишĕн, аслă Сталин заданине пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешеççĕ. 1937 ç. çак заданине, тĕрĕссипе илсен, пурнăçа кĕртнĕ те ĕнтĕ: çак çулхи тыră тухăçĕ 7 мĕлйард пăт патнелле пырать.

Совет влаçĕ хамăр çĕрсене суйласа илнĕ чи лайăх вăрлăх актарассишĕн тăрăшать. колхозсене вăл чи аван, çуртлашă вăрлăхсем парса пулăшать. Колхозсемпе совхозсен уй-хирĕсене çĕре çемçетмели имçамсем çулсерен нумай кайса тăраççĕ. Йала агрономилĕ пулăшу парса тăрас ĕç çулран çулах ÿссе пырать. Уй-хирсенче çулран çулах машинăсен хисепĕ ÿсет.

Совет влаçĕ Узбекистанăн, Таджикистанăн, Туркменистанăн çеçен-хирĕсене усăлă тăвассишĕн пĕтĕм вăйне хурса кĕрешет, çĕрмамăкĕ акмалли çĕр талкăшне аслăлатса, çав çеçен-хирсене шăвармалли ĕçсем тăвар. Çĕршыв ытларах тĕш-тыră, техникăлă культурăсем, сырла-çимĕçсем, пахча-çимĕçĕсем илсе, тăрăр тесе Совет влаçĕ тата ытти пысăк ĕçсем те нумай тăвать.

Вăйлă тыр-пулă тухăçĕшĕн, тыр-пулă тата ытти продуктăсем нумайрах пухса кĕрессишĕн пыракан çак кĕрешÿре халь колхоз хресченĕсем те ÿссе пыраççĕ. Колхозник ĕнтĕ типĕ çанталăка тата типĕ çилсене хирĕç кĕрешсе ĕçре нимĕн тума пултарайми çын мар. Ăна ĕнтĕ выçлăх пуласси хăратса тăмасть. 1936 çулта тыră ăнса пулмарĕ. Пысăк та кирлĕ вырăн йышăнса тăракан йалхуçалăхлă чылай районсене уйăр çанталăк сăтăр турĕ. Анчах Совет государстви хресченсене ссудă йĕркипе 250 мĕлйун пăт ытларах тĕштыră пачĕ, вăрлăх, продоволстви парса пулăшрĕ, 1937 çултах пысăк тыр-пулă тухăçĕ илме май пачĕ.

Тутă та савăнăçлă пурăнать халь колхозлă йал. Вăл ыран мĕнле пурăнассинчен хăрамасть, вăл ыранхи кун ăна валли тата та çĕнĕ ырлăхсем, тата та пысăкрах ырлăхсем кÿрессе пĕлсе шанса тăрать. Колхозлă йалăн пурлăхлă пурнăçĕ ÿссех пырать. Хăвăрттăн та йĕркелĕн хăпарса пырать вăл кучухнехи культурăн цусмисем тăрăх, хула культури патне сывхарса пырать. Иртнĕ ылханлă пурнăçран йулнă тискер йапалана—хулапа йал хушшинчи тĕпсĕр сырмана—капиталисăм чухне иртеймескере, социалисăм питĕрсе пырать.

„Смычка" колхозра

ЙЕТĔРНЕ. 20 çул хушшинче Исампай йалĕн сăн-сăпачĕ пачах улшăнчĕ. Йалта 109 хуçалăх, вĕсенчен 101 хуçалăх колхоза пĕрлешнĕ. Колхоз пуйан та культурăлă пурнăç туса пачĕ. Ĕлĕк начар пурăннă чухăнсем Смелов Гаврил, Михалкин Николай, Шатайев Игнати, Ф. Григорйев, П. Миронов халĕ пур те çĕнĕ те таса çутă çуртсенче пурăнаççĕ. Вĕсем ĕлĕк пуйансем патĕнче тарçăран тухайман, ишĕлсе анас пек ларакан пÿртсенче пурăннă. Вĕсем кăçал сахалтан та 250—300 пăт тĕштыră илеççĕ.

Колхоз çак çулсенче икĕ лаша вити, столовăй, мастерской, хуртхамăр утарĕ туса лартрĕ, автомашинă илчĕ. 7 пин тенкĕ парса айăр туйанчĕ. Вăл айăр кăçал Горьки хулинче чупура пулса 2-мĕш вырăн йышăнчĕ.

Кашни хуçалăх хаçат-журнал çыранса илет. Почтальон И. Кузьмин хаçат-журнал сарассипе тăрăшса ĕçлет. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна Йетĕрнери çыхăну пайĕ 3 хутчен премиленĕ.

Йал варрине çĕнĕ клуб, вулав çурчĕ вырнаçнă. Кунта тĕрлĕрен кружоксем ĕçлеççĕ. Йалхуçалăх кружокĕнче 46 çын, музыкă кружокĕнче 17 çын вĕренет.

Кăçал вулав çуртĕнче тĕрлĕрен темăсемпе 62 доклад тунă, 43 хутчен пĕрле пухăнса радио итленĕ. Илемлĕ литература, хаçатжурнал вулаççĕ. Çулахи кунсенче массăлă канусем туса ирттернĕ.

Вулав çуртĕнчех ССР Союзĕн Конституципе суйлав саккунне вĕренмелли кружоксем ĕçлеççĕ.

Ник. Цветков.

Совет Сойуз ӗҫҫыннисем ССР Сойузӗн Аслӑ Советне депутата суйлама хӑйсем палӑртнӑ кандидачӗсене хӗрӳлӗ саламлаҫҫӗ

Мускаври „Сталин“ суйлав округӗнчи ӗҫҫыннисем халӑхсен аслӑ ҫулпуҫӗ Иосиф Виссарионович Сталин Сойуз Совечӗн депутатне суйланма Сталин суйлав округӗ тӑрӑх баллотировкӑна тӑма килӗшни ҫинчен пӗлтернине питӗ хытӑ хавасланса йышӑннӑ.

Спартак площечӗнче нойабӗрӗн 10-мӗшӗнче питӗ пысӑк митинг пулса иртнӗ. Митинга Куйбышев йачӗпе тӑракан електрокомбинат, Куйбышев йачӗпе тӑракан завод, ЦАГИ, Лепсе йачӗпе тӑракан завод тата нумай ытти предприйатисен рабочисем, служащисем — 125 пин ҫын пухӑннӑ.

Куйбышев йачӗпе тӑракан електрокомбинатри партире тӑман стахановка М. М. Орлова йулташ тухса ҫулӑмлӑ сӑмах каланӑ.

„Коммунистсен парти тата халӑхсен аслӑ ҫулпуҫӗ Сталин йулташ,—тенӗ Орлова йулташ,—сталинла пиатилеткӑсен ҫулӗсем хушшинче хамӑр ҫӗршыва хӑватлӑ социалисӑмла державӑ туса хучӗҫ. Сталин йулташ пире ӗҫ прави, вӗренӳ прави, канӑҫ прави ҫирӗплетсе паракан социалисӑмла Конституци туса пачӗ.

Коммунистсен парти, Сталин йулташ йертсе пынипе, фашисла разведкӑсен агенчӗсене — троцкистсене, бухаринцӑсене ҫапса ҫӗмӗрчӗ. Етемлӗхӗн ҫав чи иресӗр кайашӗсем пире выҫлӑх, чухӑнлӑх, вилӗм хатӗрленӗ, пирӗн ӗнсе ҫине капиталистсемпе помещиксене лартма шутланӑ. Вӗсем пирӗн чечекленекен Украинӑна нимӗҫ фашисӑмне, Уралпа Приморйене Йапони вӑрӑхурахӗсене кӳмертен те ваккӑн та сутма шутланӑ.

Ун пек нихӑҫан та пулас ҫук. Кунтан пире Сталин йулташ ҫӑлса хӑварчӗ. Аслӑ Сталин пирӗн суйлав округӗ тӑрӑх баллотировкӑна тӑма килӗшнипе мӗнле савӑнас мар-ха пирӗн!“

Халӑхсен ҫулпуҫне Сталин йулташа хисеплесе хавасланса кӑшкӑрса алӑ ҫупни нумай вӑхӑт хуппи лӑпланмаст.

Митингра пӗр сасӑпах Сталин йулташ патне ҫырнӑ ҫырӑва йышӑннӑ.

Мускаври Молотов суйлав округӗнчи ӗҫҫыннисен 80 пин ҫынлӑ митингӗ пысӑк ҫӗкленӳпе иртнӗ. „Серп и молот“ металлурги завод коллективӗ йачӗпе митингра сӑмах тухса каланӑ Н. П. Жетвин инженер ҫапла каланӑ:

„Хаҫатсем ҫинче округ суйлав комиссисене йанӑ уҫӑ ҫырува вуласан, хамӑр савӑннипе тата кӑмӑл тулнипе каласа пама сӑмах та тупма ҫук. Вйачеслав Михайлович Молотов йулташ хӑй Сойуз Советне пирӗн округ тӑрӑх баллотировкӑна тӑма килӗшнипе пирӗншӗн питӗ пысӑк хисеп турӗ. Епӗр вӑл хисепе стахановла ӗҫпе, пысӑк пахалӑхлӑ хурҫӑ кӑларассине ӳстерсе тавӑратпӑр. Пирӗн пата тӑшман кӗме тӑрсан, епӗр ҫирӗп отпор пама пултаратпӑр“.

Митинга пухӑннисем Молотов йулташ патне ҫыру йама йышӑннӑ.

Мускаври Краснопресненски суйлав округӗнчи ӗҫҫыннисен митингӗнче 45 пин ҫын пулнӑ. Митингра сӑмах тухса калакансем Мускав большевикӗсен руководителӗ Никита Сергеевич Хрущов йулташ Сойуз Совечӗн депутатне суйланма Краснопресненский суйлав округӗ тӑрӑх баллотировкӑна тӑма килӗшнипе хӑйсем савӑнни ҫинчен калаҫҫӗ.

Минск ӗҫҫыннисем, хурҫӑ полководец, Совет Сойузӗн пӗррӗмӗш маршалӗ Климент Йефремович Ворошилов йулташ Совет Сойузӗн депутатне суйланма Минск хула суйлав округӗ тӑрӑх баллотировкӑна тӑма килӗшни ҫинчен пӗлтернипе питӗ пысӑк хавасланса кӗтсе илнӗ. Совет Белоруссин столици ӗҫҫыннисен пӗтӗм шухӑшӗ ҫинчен Ворошилов йачӗпе тӑракан завод стахановец Лоскат йулташ, 55 пин ҫынлӑ митингра, ҫапла каласа панӑ:

„Епӗр, Аслӑ Сталин йертсе пынипе хӗрӳлӗн йуратнӑ тата пикам ҫӗнтерейми Хӗрлӗ ҫара ҫитӗнтернӗ, пӗтӗм хӑйӗн пурнӑҫне Совет халӑхӗн телейӗшӗн тата савӑнӑҫӗшӗн кӗрешес ӗҫе панӑ ҫыншӑн савӑнсах сасӑлатпӑр“.

Митингра пулнисем Ворошилов йулташ патне саламлӑ ҫыру йанӑ.

(ТАСС).

Харьковри машиностроителсен стахановла ӗҫӗ

ХАРЬКОВ, 13-XI (ТАСС). Харьковри машиностроении завочӗсенчи стахановецсемпе ударниксем, ССР Сойузӗн Аслӑ Совечӗн суйлавне хатӗрленсе, производствӑра ҫӗнӗрен ӑнӑҫусем тума тӑрӑшаҫҫӗ. Сталин йачӗпе тӑракан електромеханикӑ тата турбогенератор завочӗн № А—7 цех коллективӗ уйӑхри плана срукчен, нойабӗрӗн 29-мӗшӗнче тултарма пулнӑ. Уйӑхӑн пирвайхи вунӑ кунӗ хушшинче цех Донбасс шахтисем валли оборудовани заказне пӗтӗмӗшпех тултарнӑ. Нойабӗрӗн 11-мӗшӗнчен цехра стахановла ҫирӗмкунлӑх пуҫланнӑ.

Коминтерн йачӗпе тӑракан заводри нумай рабочисем, халиччен нормӑна тултарса пырайманнисем, малти ӗрете тухса пыраҫҫӗ. Ҫапла, сӑмахран, рабочи Полуйан йулташ, иртнӗ уйӑхра нормӑна аран-аран тултарса пынӑ пулсан, халӗ кулленех нормӑна икӗ хут тултарса пырать, унӑн ӗҫӗнче брак пулмасть.

(ТАСС).

Суйлавҫӑсен спискисене тӗрӗслеме пуҫланӑ

ЙОШКАР-ОЛА, нойабӗрӗн 13-ш (ТАСС). Мари республикӗнче суйлавҫӑсен спискисене тӗрӗслеме пуҫланӑ. Чылай вырӑнсенче суйлав саккуне пӑснӑ фактсем тупса палӑртнӑ. Мари-Турен районӗнчи Партас йалсоветӗнче суйлавҫӑсен спискине счетовод тунӑ. Вӑл ӗҫе вӑл „хӑй астунипе“ туса иртгернӗ. Ҫапла тунипе 40 суйлавҫӑна спискӑна кӗртмесӗр хӑварнӑ. Йелас районӗнчи Ратмар суйлав участкинче спискӑра пурнӑҫ тӗлӗшпе тата мӗнле нацирен ҫӗнӗ графасем хушса кӗртнӗ. Национальнӑҫсен Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен Йошкар Ола хула суйлав округӗнче хӑшпӗр суйлавҫӑсене икӗ спискӑна кӗртнӗ.

Октӑбӗрти Социалисӑмла Аслӑ революци ҫирӗм ҫул тултарнӑ йатпа Копенгагенра чаплӑ лару пулнӑ

СТОКГОЛЬМ, 12-XI (ТАСС). Ӗнер Совет Сойузӗн туссӗсен Данири обществи Октӑбӗрти Социалисӑмла Аслӑ революци ҫирӗм ҫул тултарнӑ йатпа чаплӑ лару туса иртернӗ. Ларура Данири паллӑ писателӗ Мартин Андерсен Нексе пысӑк сӑмах тухса каланӑ.

Чаплӑ ларура ССР Сойузӗн Данири поверенвайӗ Линде йулташ пулнӑ. Совет Сойузӗн Данири обществи Линде йулташа ларура, ССР Сойузӗн Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитет председателне Калинин йулташа пама, саламлӑ кӗнеке йанӑ. Ҫав саламлӑ кӗнекене 53 пин ҫын алӑ пуснӑ.

Испанири фронтсенче. Республикӑ ҫарӗн боецӗсем зенитлӑ оруди патӗнче (Центрти фронт).

(Сойузфото).

Спискӑсем ҫине нумай суйлавҫӗсене кӗртмесӗр хӑварнӑ

БУЗУЛУК, нойабӗрӗн 13-мӗш (ТАСС). Бузулук суйлав округӗнче „ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйламали Положенине“ пӑснисем нумай пулнӑ. Бузулук районӗҫтӑвкомӗ суйлав участкисене халӑх пурнакан нумай вырӑнсене—Боровой, Партизанский, Опытнӑй т. ыт те кӗртмен. Ново-Александров йалсоветӗнче йалсовет председателӗ Акимов суд тунӑ, анчах правасӑр хӑварман ҫынсене спискӑна кӗртмесӗр хӑварнӑ.

Хулари алаҫтассен ертелӗнче Вико парторг ҫӑвара карса йулнипе участкӑри суйлав комиссий составне чӑсник тата чиркӳ старӑсти пулнӑ ҫынсене тӑратнӑ. Суйлавҫӑсем сыхӑ пулнипе ҫеҫ ҫав клас тӗлӗшӗнчен йут ҫынсене комиссирен сирсе пӑрахнӑ.

Иккӗмӗш пйатилеткӑ займӗн 5-мӗш тиражӗ

Ворошиловградри (Донецк облаҫӗ) рабчисем орденоносецсем ыйтнипе, ССР Сойузӗн Финанс халӑх комиссариачӗ государствӑн Шалти иккӗмӗш пйатилеткӑ (гӑваттӑмӗш ҫулхи кӑларӑм) займӗн пиллӗкӗмӗш тиражне Ворошиловградра иртермеле тунӑ.

Тираж 1937 ҫулхи декабӗрӗн 25-мӗшӗнче пулать.

Займӑн условийӗсем тӑрӑх, пиллӗкӗмӗш тиражран пуҫласа, выигрышсен хисепӗ нумайрах пулать. Пиллӗкӗмӗш тиражра проигрышсӑр выпускри 200 разрйад ҫине пӗр мӗлйун та 60 пин выигрыш—173 мӗлйун та 920 пин тенкӗлӗх тухать (иртнӗ тӑватӑ тиражра кашнинче пӗр мӗлйун выигрыш—164 мӗлйун та 920 пин тенкӗлӗх тухнӑ). (ТАСС).

СОВЕТ СОЙУЗӖ ТӐРӐХ

* Нойабӗрӗн 7-мӗшӗнче „Сойузкинохроникӑн“ Мускаври студин 30 оператӑрӗ Хӗрлӗ плӑщадре тата районсенче Октӑбӗр праҫникне уйавланине ӳкернӗ. Ҫав кунах каҫпа „Двадцать лет“ йатлӑ саслӑ фильм кӑларнӑ. Халь режиссерсен бригади Октӑбӗрти Социалисӑмла Аслӑ революци 20 ҫул тултарнине вунпӗр сойузлӑ республикӑсенче пуринче те мӗнле уйавласа иртернине кӑтартса пысӑк фильм хатӗрлет. Вӑл фильмра Октӑбӗр уйавне урӑх ҫӗршывсенче уйавлани те кӗрет.

* * *

* Калинин облаҫӗнчи „Коленовка“ колхоз членӗ Иван Савелйев кӑҫал 900 ӗҫкунӗ ӗҫлесе илнӗ. Ӗҫкунӗсем тӑрӑх вӑл 108 пӑт ыраш, 54 пӑт тулӑ, 22 пӑт сӗлӗ, 35 пӑт панулми, 36 пӑт пӑрҫа, 1.350 пӑт ҫӗрулми, 162 пӑт купӑста, 328 пӑт фураж, кунсӑр пуҫне чӗкӗнтӗр, йӳҫ кӑшман, кишӗр нумай илнӗ. Калинин хулинче демонстрантсен колоннинче Савелйев колхозник хӑйӗн тупӑшӗсене 30 лав ҫине тийеве иртсе пынӑ. Ҫав 30 лав ҫинче унӑн тупӑшӗн виҫҫӗмӗш пайӗ ҫеҫ пулнӑ. Пӗтӗм тупӑшне тийес пулсан 100 лава та кӗрес ҫук.

* * *

* Карабалтински районри „III Интернационал“ колхозри стахановка Оторбаева йулташ (Киргиз ССР), Октӑбӗрти Социалисӑмлӑ Аслӑ революци 20 ҫул тултарнӑ тӗле пысӑк тухӑҫлӑ сахӑр чӗкӗнтӗрӗ тума сӑмах панӑ. Хӑйӗн участкинчи малтанхи гектарсенчен Оторбаева йулташ гектар пуҫне 1400 центнершер чӗкӗнтӗр кӑларнӑ та ӗнтӗ. Сахӑр чӗкӗнтӗрӗ кӑҫал ытти колхозсенче те пысӑк тухӑҫлӑ пулнӑ.

* * *

* Харьковри штемпӗл-гравер тӑвакан 8-мӗш полиграфи фабрикӗ „нумератор-автоматсем“ кӑларма пуҫланӑ. Ӗлӗк вӑл машинӑсене йут патшалӑхсенчен кӳрсе тӑнӑ. Фабрик малашне кашни уйӑхрах 70—80 автомат кӑларса тӑма пуҫлать.

Пассажирсем хушшинче суйлав умӗнхи агитаци тӑваҫҫӗ

ХАРЬКОВ, 13-XI. (ТАСС) Харьков вокзалӗнче кашни кулленех пассажирсем пиншер ҫын пулаҫҫӗ. Пойӑс кӗтнӗ чухне вӗсен пушӑ вӑхӑт пулать. Харьков—Пассажирскӑйа станцинчи парторганизаци пассажирсем хушшинче суйлав саккунӗ ҫинчен пропаганда тума пассажирсем кӗтмели пӗр залра агитпункт организациленӗ.

Агитпункта илемлетсе тунӑ тата унта чечексем лартнӑ. Сӗтелсем ҫинче—йаланах ҫӗнӗ хаҫатсем тата суйлав капанийӗ валли кӑларнӑ литературӑ. Пассажирсем кунта ССР Сойузӗн Аслӑ Совечӗн суйлав кампанийӗ тӗлӗшпе кирек мӗнле ыйтупа та справкӑ илме пултараҫҫӗ.

Агитатӑрсем Сталинла Конституцин статйисене сасӑпа вуласа параҫҫӗ. Вуланине йаланах пассажирсем 100—150 ҫын итлеҫҫӗ. Вуланӑ хыҫҫӑн пассажирсем тӗрлӗрен ыйтусем параҫҫӗ: инҫе ҫӳрекен пойӑссем ҫинчи суйлавӑн техники ҫинчен, вокзалри суйлав участкин ӗҫӗсем ҫинчен, т. ыт. те.

Англи тата Франко

ЛОНДОН, нойабӗрӗн 12-мӗш. (ТАСС). Англин йутҫӗршыв ӗҫӗсен министерстви Англи правителствипе Франко генерал контролӗнче тӑракан Испани ҫӗрӗ ҫинчи влаҫсем хушшинче килӗшӳ тӑвасси ҫинчен официаллӑ пӗлтерӳ кӑларнӑ. Саламанкӑра, йе ӑҫта та пулин урӑх вырӑнта Англи правителствин агӗнтне лартма йышӑннӑ. Англи правителстви те, хӑйӗн черечӗпе, ҫав тӗллевсемпех Лондонра Франко генерал агӗнтне йышӑнма килӗшнӗ. Кунсӑр пуҫне, икӗ йенчи пунктсенче те, виҫелӗ хисеппе, агӗнт помощникӗсене лартаҫҫӗ. Франко генерал агӗнтне Лондона кӗртни, тенӗ зайавленире, Англи правителстви Франко генерал контролӗнче тӑракан Испани ҫӗрӗ ҫинчи влаҫсемпе килӗшсе йышӑннине пӗлтермест.

ХРОНИКӐ

— ССР Сойузӗн Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитечӗ С. Е Скрынников йулташа ССР Сойузӗн Апат-Ҫимӗҫ промышленнӑҫ Халӑх Комиссарӗн заместителӗ пулма ҫирӗплетнӗ.

— ССР Сойузӗн Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитечӗ М. И. Чигринцев йулташа ССР Сойузӗн Апат-Ҫимӗҫ промышлӑннӑҫ Халӑх Комиссарӗн заместителӗ пулма ҫирӗплетнӗ.

— ССР Сойузӗн Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитечӗ П. С. Жемчужина йулташа ССР Сойузӗн Апат-Ҫимӗҫ промышленнӑҫ Халӑх Комиссарӗн заместителӗ пулма ҫирӗплетнӗ.

Пединститут пӗррӗмӗш вырӑнта

Октӑбӗрти Социалисӑмлӑ революци 20 ҫул тултарнӑ йатпа Шупашкар хулинче пӑшал персе тӗл тивретес тӗлӗшпе ӑмӑртусем пулса иртрӗҫ. Ӑмӑртусене Осоавиахимӑн чылай пуҫламӗш организацисем хутшӑнчӗҫ. Шупашкарти педагогикӑ институчӗ ҫав ӑмӑртусенче пӗррӗмӗш вырӑн йышӑнчӗ. Тимофейев команди 500 очкоран 431 очко тунӑ.

Ҫавӑн пекех Шупашкарти пединститут Ижевскри (Удмурт АССР) пединститутпа персе тӗл тивретес тӗлӗшпе заочнӑ ӑмӑртрӗ. Виҫӗ положенирен (выртса, чӗркуҫланса, тӑрса) персе 1 500 очкоран 1.146 очко илчӗ. Ижевскри пединститут команди 1.043 очко ҫеҫ тунӑ.

К. Лазарев.

Пӗр мӗлйун та 16 пин тенкӗ выльав укҫи тӳленӗ

Иккӗмӗш пйатилеткӑ (тӑваттӑмӗш ҫулхи кӑларӑм) займӑн 1, 2, 3 тата 4 мӗш тиражӗсем тӑрӑх Чӑваш республикӗнчи перекет кассисем ку таранчен пӗр мӗлйун та 16 пин тенкӗ выльав укҫи тӳленӗ.

Илемлӗ тӗрӗсен выставки

Кӑҫалхи нойабӗрӗн 19-мӗшӗнче, Мускавра, художествӑлӑ промышленнӑҫ институтӗнче илемлӗ тӗрӗсен Пӗтӗм Сойузри выставки уҫӑлать. Ҫак выставкӑна Чӑвашпромсойуз та хӑйӗн тӗррисене илсе каять.

Выставкӑна тӑратмали експонатсенчен тӗрленӗ скатертсем, салфеткӑсем, кӗпесем пур. Ку експонатсемпе Чӑвашпромсойузран йатарласа пӗр ҫын каять.

Выставкӑна нумай промыслалӑ кооперацин Пӗтӗм Сойузри Совечӗ организацилет.

Редакцине килнӗ ҫыру

Редактӑр йулташ!

Кӑҫалхи октӑбӗрӗн 11-мӗшӗнче „Чӑваш Коммунӗ“ хаҫатра искусствӑ работникӗсен конференцийӗ ҫинчен ҫырнӑ статйа пичетленчӗ. Епӗ ҫав статйара мана халӑх тӑшманӗсен шутне кӗртнине тӗрӗс мар тесе шутлатӑп.

Епӗ хамӑн ӗҫе йаланах тӳрӗ кӑмӑлпа туса пыма тӑрӑшнӑ. Манӑн атте—рабочи, анне прачкӑ пулнӑ. Епӗ хам 8 ҫултах тӑлӑха йулса, Вйаткӑри (халӗ Киров) ача-пӑча ҫуртӗнче ӳсрӗм. Унтан 10 ҫул хушши чукунҫул ҫинче грузчик, конторщик тата прийомщик пулса ӗҫлерӗм. 1926 ҫулта Мускаври рабфака вӗренме кӗтӗм. Ӑна вӗренсе пӗтерсен, 1930 ҫултан пуҫласа, 5 ҫул хушши консерваторинче вӗрентӗм.

Консерваторине вӗренсе пӗтернӗ хыҫҫӑн, РСФСР Ҫутӗҫ халӑх комиссариачӗ мана Чӑваш республикине ӗҫлеме йачӗ. Епӗ вара Шупашкарти музыкӑ училищинче преподавателӗ пулса ӗҫлеме пуҫларӑм.

Малтанах епӗ сольнӑй класа йертсе пырса, унти студентсене лайӑх пӗлсе ҫитсен, вӗсен вӗренӳ пахалӑхӗ ҫителӗклӗ маррине туйса илтӗм. Епӗ вӗсене тӗрӗс йурлама вӗрентес тӗлӗшпе пӗтӗм вӑйа хурса ӗҫлерӗм. Ҫав ӗҫе хама вӗрентсе кӑларнӑ профессӑрсемпе канашласа туса пытӑм. Зачотсем йышӑнакан комиссий хакланӑ тӑрӑх, 1936 ҫулта епӗ вӗрентнӗ ачасем ҫакӑн пек паллӑсем илчӗҫ: „отлично“—1, „хорошо“—14 тата „удовлетворительно“—3. Манӑн преподавани ӗҫне комиссий „вӑтам“ шутларӗ. Епӗ вӗрентнӗ студентсем концертсенче, радио тӑрӑх та час-часах йурлаччӗҫ. Вӗсен выступленийӗсем ҫинчен „Красная Чувашия“, „Канаш“ хаҫатсенче те ҫырнӑ. Хам вӗрентекен студентсем ӳссе пынӑшӑн епӗ савӑнаттӑм.

1936 ҫулхи кӗркунне, халӑх тӑшманӗсемпе ҫыхӑнса кайнӑшӑн Ленинградран хӑваласа йанӑ Порубиновски килсен, манӑн ӗҫ кайала чакма пуҫларӗ.

Манӑн, ҫамрӑк преподавателӗн ҫитменлӗхсем пулнӑ пулӗ, анчах вӗсем ҫинчен производствӑлӑ канашлусенче нихӑҫан та сӳтсе-йавман, „вокальнӑй класа салатса йани“ ҫинчен елеклӗ сӑмахсем ҫаплах ҫӳренӗ. Йулашкинчен, мана ӗҫрен тухса кайасси патнех ҫитерчӗҫ. Епӗ Шупашкартан тухса кайнӑ хыҫҫӑн, ҫав намӑса пӗлмен ҫынсем искусствӑ работникӗсен конференцийӗнче мана халӑх тӑшманӗсен шутне кӗртсе вараланӑ.

Ҫавӑнпа та ҫак статйана хӑварӑн хаҫатра пичетлесе кӑларса, ман ҫинчен нимӗн сӑлтавсӑр тийенӗ тасамарлӑха сирсе пӑрахма ыйтатӑп.

П. Огородников.

Тӳрлетни

„Чӑваш Коммунӗн“ ӗнерхи номӗрӗнче „Совет ҫӗршывӗн чи лайӑх ҫыннисем—ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйламали кандидатсем“ йатлӑ статйара Ейхе йулташӑн инициалӗ йӑнӑш пичетленнӗ. Ӑна ҫапла тӳрлетсе вуламала: Р. И. Ейхе.

Ответлӑ редактӑр
П. И. ИВАНОВ.

Вӑрнарти фосфорит заводне
локомобиль машинисӗсем
КИРЛӖ.
Хватер пур.
2—1 Завод управленийӗ.

Харпӑрхӑй тӗллӗн вӗренекен студентсене

1937 ҫулхи нойабӗрӗн 20-мӗшӗпе 26-мӗшӗ хушшинче кӑҫал ҫӗнӗрен харпӑрхӑй тӗллӗн вӗренме пӗррӗмӗш курса илнӗ студентсене Чӑвашпединститута сессине чӗнеҫҫӗ. Харпӑрхӑй тӗллӗн вӗренме пӗррӗмӗш курса малтан илнисем, хӑйсем II-мӗш курса куҫнине йанварӗн 1-мӗшӗччен формӑламасан, малала сессине килеймеҫҫӗ.

Чӑваш АССР Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗпе Пединститут
2—1. дирекцийӗ.

Китайри вӑрҫӑ

Шанхай фронтӗнче

ШАНХАЙ, нойабӗрӗн 10-мӗш. (ТАСС) Икӗ сехетре кӑнтӑрла йапонцӑсем Наӈдао (Шанхайӑн Китай пайӗ) ҫине бомбӑсем пӑрахма пуҫланӑ. Сывлӑшран артиллерилӗ бомбӑсем пӑрахни тӑсӑлнӑ. Йапони батарейӗсем Сучжоу—Крик канал хӗррине вырнаҫнӑ Йапони авангарчӗсем хӗвелавӑҫри хуларан Наӈдаона уйӑракан Хуейцзйан каналӑн хӗвеланӑҫ хӗррине йышӑнса хӗвелтухӑҫ хӗрӗнчи Китай ҫарӗсем ҫине пересҫӗ. Китай штабӗн сводки тӑрӑх, Йапони десант отрйачӗн сулахай ҫуначӗ Шанхай—Ханчжоу чукунҫул ҫинчи Фынцзйен, Сунцзйанран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнелерех, станци патнеле шунӑ. Йапонцӑсен сылтӑм ҫуначӗ Сунцзйана тытса илесшӗн хӑйарран ҫапӑҫать.

Китай штабӗн представителӗсем пӗлтернӗ тӑрӑх, Китай ҫарӗсен оборонӑ линийӗ халӗ Сунцзйанран Цинпу витӗр Шанхай—Нанкин чукунҫулӗн Хуанду станцине тата малала Наӈсйан таран ҫитет.

Ҫурҫӗр Китайра

НАНКИН, нойабӗрӗн 10 мӗш. (ТАСС). Сентрал Нйус агенствин корреспонденчӗ йулашки икӗ кун хушшинче Тайуан ҫине (Шаӈси провинци столици) темиҫе атакӑ тунӑ, тесе пӗлтерет. Йапонцӑсем хуласене ҫӗмӗрме авиаципе, танксемпе анлӑн усӑ кураҫҫӗ. Нумай ҫынсем вилнӗ тата аманнӑ. Йапони самольочӗсем бомбасем пӑрахаҫҫӗ. Тайуанрен таракансене пулеметсемпе пересҫӗ. Таракансем нумай вилнӗ. Йапони пӗлтернӗ тӑрӑх, Йапони ҫарӗсем хулана кӗнӗ те ӗнтӗ. Китайра ку пӗлтерӳ тӗрӗс мар теҫҫӗ.

ШАНХАЙ, нойабӗрӗн 11-мӗш. (ТАСС). Ӗнер Йапонин 6 ҫар карапӗ Амойа ҫине виҫӗ сехет хушшӑ бомбӑсем пенӗ. Кӑна хирӗҫ Китайӑн сӑрт хӗрӗнчи артиллери персе тӑнӑ. Йапонцӑсем десант антарма тӑни ӑнӑҫсӑр пулнӑ. Йапони матросӗсен ирӗксӗрех хӑйсен карапӗсем ҫине кайала тавӑрӑнмала пулнӑ.

НАНКИН, нойабӗрӗн 10-мӗш. (ТАСС). Пайан бомба перекен виҫӗ самольот, 9 истребител Нанкинӑн Кӑнтӑрти хапхисем ҫывӑхӗнче ҫирӗм бомбӑ ытла пӑрахнӑ. Йапони самольочӗсем ҫине Китайӑн зениглӑ артиллерийӗ пенӗ. Хула ҫинче сывлӑшри ҫапӑҫу пулса иртнӗ.

* * *

Йапонин Шанхай фронтӗнче вӑрҫакан ҫарӗсем, вӗсен вӑрҫӑ техники пит пысӑк пулнипе усӑ курса, октӑбӗрӗн йулашки кунӗсенче Китай ҫарӗсен позицийӗсем ҫине хытӑ тапӑнма пуҫланӑ.

Китай ҫарӗсем тӑван ҫӗршывӑн кашни утӑмне сыхласа геройла ҫапӑҫаҫҫӗ. Анчах вӗсен, вӑйлӑ ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн, Шанхай хулин ҫурҫӗр йенчи кварталӗсенчен—Чапейран тата Цзйанванран тухмала килнӗ. Тата вӗсен нойабӗрӗн 10-мӗшпе 11 мӗшӗнче Шанхай хулин кӑнтӑр йенчи кварталӗсенчен те—Наӈдаоран тата Путунран тухмала килнӗ. Путунпа Наӈдаон пысӑк пайне ҫунтарса йанӑ тата ҫӗмӗрсе пӗтернӗ. Наӈдаона сыхласа ҫапаҫнӑ Китай ҫарӗсене йапонцӑсем виҫӗ йенчен хупӑрласа илнӗ, вара Китай ҫарӗсем французсен йунашарти концессин территорине кӗнӗ. Французсен концессин влаҫӗсем Китай салтакӗсене лагӗрсем туса вырнаҫтараҫҫӗ.

Китай ҫарӗсем Наӈдаоран тухнӑ хыҫҫӑн Шанхайӑн пӗтӗм территорийе йапонцӑсен аллине куҫнӑ. Нанкин хулинчен Шанхайпа телеграф тӑрӑх ҫеҫ ҫыхӑну тытаҫҫӗ. Ҫыхӑну тытмали ытти майсене пӗтерсе хунӑ.

Китайран пӗлтернӗ тӑрӑх, нойабӗрӗн 10-мӗшпе 11 мӗшӗнче йапонцӑсем Шанхайа тата 10 пин ҫын салтак, 300 танк тата 300 грузовик илсе пынӑ. Шанхайран хӗвеланӑҫ йенче йапонцӑсем Шанхай—Нанкин чукунҫулӗ тӑрӑх наступлени туса пыма тӑрӑшаҫҫӗ. Чукунҫул ҫинчи Наӈсйан станци районӗнче вӑйлӑ ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ.

Нойабӗрӗн 11-мӗшӗнче йапонцӑсен 18 самольочӗ каллех Нанкин ҫине тапӑннӑ. Китайцӑсен тӳпене перекен артиллерийӗ йапонцӑсенне икӗ йӑвӑр бомбардировщик персе ӳкернӗ.

Нойабӗрӗн 11-мӗшӗнче Нанкинра студентсен митингӗ пулнӑ. Унта ҫара пулӑшма студентсен корпусне тӑвас, тесе решени йышӑннӑ. Ҫӗнӗрен организациленӗ корпуса митинг хыҫҫӑнах добровольцсем 300 ҫын ҫыраннӑ.

Ҫурҫӗр Китайра халь вӑрҫӑ пуринчен ытла Шаӈси провинцинче пырать. Нойабӗрӗн 13-мӗшӗнче, йапӑх хӗҫпӑшалланнӑ Китай ҫарӗсем, пуринчен ытла регулярнӑй мар соединенисенчен тӑракан ҫарсем, Шаӈси провинцин столицинчен—Тайуаӈ хулинчен тухса кайнӑ. Шаӈси провинцине Китайӑн регулярлӑ ҫарӗсене виҫӗ дивизи илсе пыраҫҫӗ. Тайуаӈрен кӑнтӑр йенче вӑйлӑ ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ.

Ҫурҫӗр Китайра, йапонцӑсен ҫарӗсен тылӗнче, Китайӑн революцилӗ халӑх ҫарӗн саккӑрӑмӗш армийӗ, 29-мӗш армийӗ тата партизансен нумай отрйачӗсем пит активлӑ ӗҫлеҫҫӗ. Йапонцӑсен ҫарӗсем тытса илнӗ Бейпин—Хаӈкоу чукунҫулне икӗ йенчен те китайцӑсен отрйачӗсем ҫавӑрса илнӗ.

(ТАСС).

Чӑвашсен Государствӑ Педагогикӑ Институчӗ

Чӑвашсен Учителӗ Институтне вӗренме кӗме хатӗрленмели курса татах хушса илет

КУРСА

17 ҫулхисенчен пуҫласа 34 ҫулхисем таран, вӑтам шкулсенчен вӗренсе тухнисене йе вӑтам шкулта вуннӑмӗш класра вӗреннисене тата педучилищӑра, рабфакра, техникумра йулашки ҫулхи курсра ҫур ҫултан кайа мар вӗреннисене илеҫҫӗ.

КУРСАНТСЕНЕ

кашни уйӑха 64 тенкӗ стипенди тата 20 тенкӗ хватер валли параҫҫӗ.

Ҫӗнӗрен илнисене кӑҫалхи нойабӗрӗн 20-мӗшӗнче вӗрентме пуҫлаҫҫӗ.

Зайавленисене Пединститут директӑрӗ йачӗпе ҫак документсемпе пӗрле йамалла: автобиографи, вӗренни ҫинчен справкӑ йе аттестат, ҫурални ҫинчен справкӑ, сывлӑх пирки справкӑ, виҫӗ фотокартӑчкӑ. Зайавленисене кӑҫалхи нойабӗрӗн 20-мӗшӗччен йышӑнаҫҫӗ.

ДИРЕКЦИ.

3—1

„Чӑваш Коммунӗ“ ҫырӑнса илмели хаксем; 12 уйӑха—30 т., 6 уйӑха—15 т., 3 уйӑха—7 т. 50 пус, 1 уйӑха—2 т. 50 пус. Алҫырӑвӗсене кайала памаҫҫӗ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 858. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста Заказ № 2370 Тираж 13964 58—92 см. 1—1 п. л.